24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ИЮЛЬ
25
ЭРНЕКУН
173 (5888) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Хĕрлĕ Çарăн тылĕ çирĕп те тĕреклĕ пултăр

Пирĕн тăван çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăнă сехетре, урса кайнă фашистла бандитсене хирĕç Рабочисемпе Хресченсен мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕ пĕтĕм вăй-хала хурса çапăçнă кунсенче, Совет çĕршывĕн нумай миллионлă ĕççыннийĕсем хăйсен юратнă çулпуçĕ тата учителĕ, Оборонăн Государственнăй Комитет Председателĕн Сталин юлташăн сăмахне итлерĕ. Германи фашизмне хирĕç пыракан отечественнăй вăрçăра хамăрăн ирĕклĕхе, хамăрăн чыслăха, хамăрăн çĕршыва хамăрăн кăкăрсемпе хŭтлеме Сталин юлташ чĕнсе калани пĕтĕм ĕççыннисен чĕрине кĕрсе вырнаçрĕ.

Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă хыççăн пулса иртнĕ нумай пин-пин митингсемпе пухусенче пирĕн республикăри рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем социализмлă тăван çĕршыва вĕçĕ-хĕррисĕр юратнине, Ленин—Сталин парти тавра татах та тачă пĕтĕçнине, иртĕнсе кайнă фашистсене яланлăхах çĕмĕрсе тăкма хатĕр тăнине кăтартрĕç.

Пĕтĕм совет халăхĕ, ваттисенчен пуçласа çамрăккисем таранах, хамăрăн çĕршыва сыхласа хăварма çĕкленчĕ. Предприятисенче, колхозсенче производствăлла çĕкленŭ кунран кун ŭссе пырать. «Йăлтах фронт валли!», «Пурте тăшмана çĕнтерме!» текен паттăрла лозунгсене нумай миллионлă совет ĕççыннисем ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Пĕтĕм çĕршыв фашистла вăрăхурахсене çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшать.

Çĕмĕрлери древкомбинат коллективĕ ихăçанхинчен те тимлĕрех ĕçлеме, революциллĕ сыхăлăха татах та вăйлатма, большевикла организациллĕхе çирĕппĕн пăхăнса тăма пулнă, халĕ хăйсен сăмахне большевикла пурнăçа кĕртеççĕ. Пĕтĕм коллектив нихăçанхи пек мар пысăк хастарлăхпа, стахановла ĕçлесе, мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшать. 4-мĕш номерлĕ цехри стахановка В. Мареева юлташ пирĕн редакцине янă çырура çапла çырать: «Манăн упăшка Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăван çĕршыва сыхлать. Эпĕ — стахановка, цехра раскройщица пулса ĕçлетĕп, хамăн нормăна виçĕ-тăватă хут иртерсе тултаратăп. Тухăçлă ĕçлес, тăшмансене çирĕп отпор парас çĕрте хамăрăн Хĕрлĕ Çара пулăшасси — манăн чи малтанхи ĕмĕт». Халĕ В. Мареева юлташ тепĕр профессине ĕçлеме, диспетчер пулма вĕренет

Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕ те ĕçĕн пысăк тухăçлăхне кăтартса ĕçлет. Кашни рабочи ытларах та ытларах продукци туса пама тăрăшать. Ефимовна Чернухин юлташсем ертсе пыракан цехсем хăйсен нормине яланах 160 процент таран тултараççĕ. Тимĕрçĕ Фомин тата молотобоец Матросов юлташсем июнĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа нормăна кулленех 300—330 процент таран тултарса пыраççĕ. Халĕ кунта хĕрарăмсене заводри профессисене вĕрентес тĕлĕшпе курссем организациленĕ. Инженерсемпе техниксенчен чылайăшĕ производствăра ĕçлеме куçнă. Техник Андреев юлташ малтанхи вăхăтра завод управленийĕн аппаратĕнче ĕçленĕ. Халĕ вăл вагон тăвакан цехри мастер пулса ĕçлет.

Вăрçă вăхăтĕнче мирлĕ профессе çук. Пĕтĕм çĕршыв оборона валли ĕçлет. Германи фашисчĕсем пирĕн тăван çĕршыв çине килсе тапăннă кунран пуçласах Канашпа Улатăр хушшинчи чугунçул çинчи депосенче Лунин меточĕпе ĕçлекен Чумаев тата Байдулов, Сагитов тата Терюкалов, вĕсен помощникĕсем Ермохинпа Бояркин тата Лапшакинпа Семенов машинистсем, кочегарта ĕçлекен Сергеев, Голубев, Журавлев, Лебедев юлташсем депо начальникĕн порученийĕсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Паровозсем илсе çŭрекен бригадăран бригадăна та юлмасть. Çак бригадăри слесарь-стахановецсем Золотухин, Коночкин, Игнатьев, Сперанский, Петров тата Андреев юлташсем паровозсене чи кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ремонтлаççĕ.

Хусан чугунçулĕн управленийĕ çак çŭлте асăннă бригадăсенчи стахановецсене пурне те тав туса, вĕсене ĕç кĕнекисем çине çырса панă. Халĕ паровозсем илсе çŭрекен машинистсемпе ремонтра ĕçлекен рабочисем татах та лайăхрах ĕçлеме социализмлă обязательство илнĕ. Сталин юлташ радио тăрăх туха каланă хыççăн, депора ĕçлекен рабочисем хушшинче Лунин меточĕпе ĕçлеме вĕренесси анлăн сарăлса кайрĕ. Паровозсем илсе çŭрекенсенчен 30 çын ытла слесарь ĕçне вĕренме тытăнчĕç. Улатăрти депора ĕçлекенсем хушшинче те слесарь ĕçне вĕренесси сарăлсах пырать. Слесарь ĕçне лайăх пĕлекен паровозниксем çамрăк рабочисене вĕрентме тытăннă.

Кирлĕ вăхăтра чугунçул çинчи рабочисене пулăшма комсомолецсем пыраççĕ. Пĕррехинче Улатăрти депо складĕнчен хăвăрт темиçе тонна кăмрăк тиесе ямалла пулнă. Çак ĕçе пурнăçлама ĕç вăйĕ кирлĕ пулнă. Часах чугунçул училищинче, техникумра тата технически шкулра вĕренекен комсомолецсем пырса кăмрăка вăхăтра тиесе янă.

Республикăри нумай предприятисемпе артельсем ултă уйăхри производствăлла плансене срокран малтан тата ирттерсе тултарчĕç. Етĕрнери маслозавод тата Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан артель çурçул программине срокран маларах тултарнă. Ивановăри кирпĕч завочĕн коллективĕ малтанхи вăхăтра хăйĕн программине тултарса пырайман пулсан, халĕ ăна кулленех тултарса пырать. Завод график тăрăх ĕçлет. Çĕмĕрлери «Большевик» завод коллективĕ июнь уйăхĕнче чĕртавара чылаях перекетлесе хăварчĕ. Ĕç тухăçлăхĕ 12 процент ŭснĕ. Фронта тухса кайнă арçынсем вырăнне ĕçлеме тăнă хĕрарăмсем ĕçĕн процесне хăвăрт хăнăхса пыраççĕ.

Предприятисене çĕршер хĕрарăмсем ĕçлеме пычĕç. Кашниех вĕсем производство техникине хăвăрт вĕренсе çитсе çĕршыва ытларах продукци парас шухăпа хавхаланса ĕçлеççĕ. Паллах, вĕсене куллен вĕрентсе тата пулăшса пыни кирлĕ. Вĕсене валли курссем, семинарсем, технически кружоксем тумалла. Производствăна халĕ кăна пынă работницăсене вĕрентсе пысăк квалификациллĕ работницăсем тăвас ĕçре инженерсемпе техниксем, мастерсем тата стахановецсем енчен пысăк пулăшу пуласса шансах тăмалла.

Пирĕн промышленность пĕтĕм вăйпа ĕçленине, вăл фронтри çĕнтерĕве туптаса пынине нумай тĕслĕхсемпе кăтартса пама пулать. Социализмлă тăван çĕршыв чыслăхĕшĕн кĕрешекен патриотсем калама çук пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ.

Халĕ кашни совет сыннин икĕ çынăн, виçĕ çынăн ĕçлеме тăрăшать. Ĕçĕн стахановла меточĕсем — нумай станоксемпе тата тĕрлĕ профессисемпе ĕçлесси — ытларах та ытларах сарăлса пырать. Çак движенине анлăн сарса пыни кирлĕ. Пур предприятисемпе артельсенче те перекетлĕхшĕн, тирпейлĕхшĕн кĕрешмелле. Сахалрах йышлă работниксемпех çĕршыва валли нумайрах продукци пама пĕлнине ĕçре кăтартса парас пулать. Пирĕн предприятисенче, артельсенче тата учреждениссенче чи çирĕп дисциплина пулмалла, ăна пăсма хăтланакан пур йышши дезорганизаторсем те совет законĕсем тăрăх ответ тытмалла. Ĕçре çирĕп дисциплина пулни, революциллĕ сыхăлăха ŭстерни тăшмана хăвăрт тата сахал çухатусем тунипе çапса çĕмĕрме Хĕрлĕ Çара пулăшни пулать.

Совет авиацийĕ çинчен „Санди таймс“ хаçат мĕн çырать

ЛОНДОН, июлĕн 21-мĕш. (ТАСС). «Санди таймс» хаçат çапла çырать: вăрçă ĕçĕсен пирвайхи уйăхĕнче совет авиацийĕ хăйĕн боевой пахалăхĕсене пĕтĕм тĕнчене кăтартса паче. Советăн сывлăш-çар вăйĕсем хастарлăн çапăçаççĕ тата яланах çĕнтерŭ тăваççĕ. Выраççен пĕтĕм кампанийĕнче советăн сывлăш-çар флочĕн Германи авиацине вăйлăн çĕмĕрес пултарулăхĕ питех те пăлланă вырăн йышăнса тăрать пулмалла. Совет авиацийĕ хăйне пур енчен те пултаруллă пулнине кăтартрĕ. Совет летчикĕсене вăрçа çавăн пек методсемпе туса пыма вĕрентнĕ те ĕнтĕ, халĕ çав методсемпе практикăра усă курма тивет, урăхла каласан, çĕр çинчи вăйсемпе пĕрле çыхăнса ĕçлени, противникăн бронетанковăй чăçĕсем вырнаçнă çĕре пит шалалла рейдсем туни пулса тăрать. Вăл советăн типĕ çĕр çинчи вăйĕсене хŭтлекенни пулса тăрать.

Германия Франция чылай департаменчĕсене оккупацилеме шутлать

НЬЮ-ИОРК, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк Джорнэл Энд Америкэн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Франци делегацийĕн председателĕ Висбаденра переговорсем тăвас тĕлĕшпе пухăннă конференцине Германия Нор, Эн, Ардены, Мез департаменчĕсене, Соммăн пĕр пайне тата ыттисене те туртса илсе, вĕсене хăйĕн колонийĕсем туса хума шутлани çинчен Виши правительствине секретлăн пĕлтерĕ. Çакă вăл Германия территорисем тĕлĕшпе официальнă пĕлтернĕ требованисенчен чылай пысăкрах.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(1941 çулти июлĕн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерŭ)

Июлĕн 23-мĕшĕнче Полоцк-Невель, Смоленск, Житомир енĕсенче тата фронтăн Бессарабири участокĕнче противника хирĕç вăйлă çапăçусем пынă.

Фронтăн Бессарабири участокĕн пункчĕсенчен пĕринчĕ пирĕн чассем противникăн мотополкне çĕмĕрсе тăкнă, 400 машина, 300 мотоцикл, 2 бронемашина, 25 оруди, 8 миномет тата ытти вăрçă хатĕрĕсем туртса илнĕ.

Пирĕн авиаци июлĕн 23-мĕшĕнче противникăн мотомехчаçĕсене хирĕç вăйлăн çапăçнă тата унăн аэродромĕсенчи авиацийĕ çине пыра-пыра тапăннă.

* * *

Ĕççыннин депутачĕсен Т-ски райсоветĕн исполком председателĕ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрядĕнчи разведчиксем Н. хулинчи нимĕç войскисен çар объекчĕсем тата вĕсен йышĕ çинчен 5 кун хушши сведенисем пухнă. Июлĕн 19-мĕшĕнче партизансен пысăк мар групписем хула патне пырса патруле пĕтерсе тăкнă та пулеметсенчен вăйлăн пеме пуçланă. Нимĕçсем хăраса ŭкнĕ, вĕсем партизансене хăвалама пуçланă. Партизансем, вĕсене хирĕç пере-пере, хăвăрт чакнă, противника вăрманалла астарса пынă. Маневр ăнăçлă пулнă. Хăйсен тĕп вăйĕсене партизансен сахал йышлă групписене хирĕç тăратса, фашистсем хуларан ытларах та ытларах уйăрăлса пынă. Çак вăхăтра партизансен тĕп вăйĕсем Н. хулине тепĕр енчен пырса кĕнĕ. Партизансем, караула пĕтерсе хурса, гранатăсем ывăтса боеприпассен склачĕсене çунтарса янă. Вутра фашистсен снаряженисемпе продовольстви нумай шĕтнĕ. Партизансем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 85 çынна вĕлернĕ, 19 автомашина, 24 пулемет, батальон канцелярине туртса илнĕ тата 16 çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Фашистла войскăсен тылĕнче çапăçакан Хĕрлĕ Çар отрячĕсемпе партизансен отрячĕсем противникăн тылне час-часах деморализацилеççĕ тата унăн речĕсенче паника кăлараççĕ. Ун çинчен пĕрремĕш танковăй группăна панă приказ ŭççăн кăтартса парать. Вăл приказа хĕвеланăç енчи фронтăн участокĕсенчен пĕринче тыткăна лекнисенчен туртса илнĕ. Приказ çине фон-Клейст офицер алă пуснă. Приказра çапла каланă:

«Совет танкĕсем çĕмĕрсе кĕни çинчен калакан хыпарсем ĕçлĕ çынсем хушшинче паника кăларса ячĕç. Эпĕ çакăн пек хушатăп: паника саракансене кашнинех çар судне памалла. Вĕсене итлеменшĕн е хăравçă пулнăшăн айăпламалла. Паника пулсан кашнинчех офицерсен пурин те чи çирĕп мерăсем йышăнмалла тата кирлĕ пулсан хĕçпăалпа усă курмалла. Тревога пулсан, эпĕ паникăллă кăшкăрма, сăмахран: «Совет танкĕсем татса кĕчĕç» т. ыт. те, тесе кăшкăрма чараташ».

* * *

Фашистсен инженернăй батальонĕ Д. юханшывĕ урлă каçма переправа хатĕрленĕ. Пирĕн чассем шывăн тепĕр енче тĕплĕн маскировка туса вырнаçнă. Нимĕçсем переправа сооруженине туса пĕтерсен, подполковник Петров подразделенийĕ переправăна хăвăрт йышăннă. Тăшман çыранне ытти подразделенисем те ыткăннă. Часах переправăна йăлтах пирĕн войскăсем ярса илнĕ. Вăйлă çапăçура тăшман батальонĕнчи 300 фашист вилнĕ тата аманнă. Çапăçу пулнă вырăнта тăшманăн вуншар мотоцикл, боеприпассемпе вăрçă хатĕрĕсем нумай выртса юлнă.

* * *

Красноармеецсен Н-ски часĕн танксене хирĕç кĕрешмелли орудийĕ фашистсен танкĕсем çине пит тĕл персе тăнă. Анчах та тăшман стрелокĕсем майĕпен пĕтĕм орудийнăй расчета стройран кăларнă. Оруди патĕнче наводчик Людсков кăна тăрса юлнă. Хирĕç тăма пуçласса кĕтмесĕрех, фашистсен мотомехколонни малалла ыткăннă. Анчах тăшман йăнăшнă. Людсков юлташ противник танкĕсемпе пĕчченех çапăçăва кĕрсе кайса, хăйĕн орудийĕнчен вĕсене тŭрĕ наводкăпа пеме пуçланă. Паттăр наводчик тăшманăн 5 машинине çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Заводсемпе фабрикăсенчи стахановецсем ĕç тухăçлăхне пысăккăн ŭстерсе фашизма çапаççĕ, гитлерла бандăсен вилĕмне хăвăртлатаççĕ. Н-ски станкостроительнăй заводри слесарь Лисицын юлташ, питех те сложнăй деталь туса, 4 ĕç кунĕнче 26 смена нормине тултарнă. Молотовски чугунçул çинчи Могзон депповĕнчи машинист Сергиенко юлташ паровозăн талăкри вăтам хăвăртлăхне 960 километра çитернĕ, норма тăрăх 400 километр пулмалла. Рыбинскри çулйĕр машинисем тăвакан заводри токарь Пантлеев юлташ кашни кунах 4-шар норма тата ытларах та парать. Пятигорскри трикотажпа çĕвĕ çĕлекен фабрикăри стахановка-мотальщица Аня Сороколат пуçарнипе фабрикăра нумай станоксемпе ĕçлесси анлăн сарăлнă. Мотальнăй цехри работницăсем Кравченко, Ростомова, Склярова, Гречихина тата Сорокина юлташсем 8—12 йĕкепе ĕçлес вырăнне 24 йĕкепе ĕçлеме тытăннă. Çапла вара 12 работница малтан 36—48 работница тунă ĕçе çăмăллăнах туса пыраççĕ. Фергенари Дзержинский ячĕпе тăракан пиравăр фабрикинчи мастер помощникĕсем Юсупов, Кадыров тата Муладжанов юлташсем малтанхи вăхăтра 48-шар станокпа ĕçленĕ пулсан, хальхи вăхăтра 64 станокпа ĕçлеççĕ. Бакури нефть оборудованийĕн заводĕнчи тимĕрçĕ Щукин юлташ параламалли станок валли приспособлени туса хатĕрленĕ, вăл метала 30 процент перекетлеме май парать. Ивановăри «Парижская коммуна» фабрикăри пиравăр тĕртес ĕç мастерĕсем пурте хăйсен ĕç вăхăтĕнче туллин ĕçлеççĕ, вĕсем 356 станок вырăнне 646 станокпа ĕçлеççĕ. Т. хулинчи Н-ски заводра Павлов юлташ мастер пулса ертсе пыракан смена, кивĕ оборудованипе пĕлсе усă курса, темиçе кун хушшинчех 12 пин тенкĕ перекетленĕ.

* * *

Июлĕн 22-мĕшпе 23-мĕш хушшинче çĕрле нимĕç самолечĕсем столица çине пырса тапăннă вăхăтра Мускав хулинчи граждансем хăюллăпа хастарлăх, организациллĕх тата дисциплинăллă пулнине кăтартнă. Управдом Макаров юлташ пожарнăй командăн ĕçне лайăх организациленĕ. Çурт çывăхне вут чĕртекен бомбăсем 19 ŭкнĕ, вĕсене хăвăрт тата пит ăстан сŭнтернĕ. Макаров хăй 5 бомба сŭнтернĕ. Хулари районсенчен пĕринче вут чĕртекен пĕчĕк бомбăсем 200 ытла ŭкнĕ пулнă. Вырăнти пожарнăй командăсем тата граждăнла халăхсенчен организациленĕ дежурнăй постсем бомбăсене çийĕнчех сŭнтернĕ. Боткин ячĕпе тăракан больница территорине июлĕн 22-мĕшĕнче вут чĕртекен бомбăсем нумай пăрахнă пулнă. Вĕсенчен темиçе бомбине сторожсем Елисеевпа Кондратьев юлташсем сŭнтернĕ, ыттисене вырăнти пожарнăй командăсем сŭнтернĕ.

Грецире Германипе Итали войскисем хушшинче пулнă тытăçусем

НЬЮ-ИОРК, июлĕн 23-мĕш. (ТАСС). Нью-Йоркри «Таймс» хаçат Анкарăран çапла пĕлтерет: унта Грецирен пырса çитнĕ çынсем Германипе Итали салтакĕсем хушшинче инцидентсем пулса иртни çинчен каласа панă. Грецире Италипе Германи войскисем хушшинчи отношенисем çивĕчленсех пыраççĕ. Итальянецсем продовольстви турттарса пыма Германия паракан пропускене итальянецсем час-часах йышăнмаççĕ, немĕçсем те хăйсем енчен итальянецсен çавăн пек пропускĕсене час-часах йышăнмаççĕ. Куракан çынсем пĕлтернĕ тăрăх, Италипе Германи офицерĕсем немĕç салтакĕсене Италипе салтакĕсенчен уйăрса илме хăтланаççĕ.

Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, немĕçсем часчасах итальянецсен йăлисенчен кулаççĕ тата итальянецсен çар форминчен кулса мăшкăллаççĕ.

Греции пуканнелле правительствин тĕрĕссипе немĕнле власть та çук пирки, — тесе çырать юлашкинчен хаçат, — вăл йĕркелĕх туса хума пултараймасть. Греци çĕршывĕнче пур çĕрте те йĕркесĕрлĕх. Греци халăхĕ хăйĕн тарăхăнне ытларах та ытларах уççăн кăтартать.

Германин паллă чылай генералĕсене ĕçрен хăтарма хатĕрленни

НЬЮ-ИОРК, июлĕн 23-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат Европăри пĕр çĕршывăн столицинчи нейтральнăй дипломатсенчен илнĕ сведенисем тăрăх, Германин Африкăри войскисен командующине Роммель генерала Лист генералпа пĕрле Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра вăрçă ĕçĕсене ертсе пыма Ливирен чĕнсе илнĕ, тесе пĕлтерет. Çав сведенисем тăрăх, Кейтель тата Браухич генералсене Германи войскисен ĕçĕсем çителĕксĕр пулса пыраççĕ, тесе руководствăран хăтарнă.

ЦЮРИХ, июлĕн 23-мĕш. (ТАСС). Кунта килсе тăракан сведенисем тăрăх, çитес вăхăтра Браухича хăй ĕçлекен вырăнтан хăтараççĕ. Германири информаци Бюровĕ Браухича армейский пĕр штаба высший командованипе уйăрăм соединенисен хушшинчи «сыхăнăва вăйлатма» янă тесе пĕлтернĕ. Ĕçе пĕлсе тăракансен хушшинче Браухича ăнсăртран урăх çĕре яни, ăна вăрçă ĕçĕсен руководствинчен хăтарнипе сыхăнса тăрать, тесе кăтартса параççĕ Хĕвелтухăç фронтра Германин стратегиллĕ тĕп планĕсем арканса кайнăшăн Браухич тата ытти генералсем айăплă, тесе шутлаççĕ пулас.

Совет Союз Геройĕн званине икĕ хут илнĕ подполковник Степан Павлович Супрун.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(1941 çулти июлĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерŭ)

Ыран июлĕн 24-мĕш тенĕ чух çĕрле Порхов, Полоцк-Невель, Смоленск тата Житомир енĕсенче вăйлă çапăçусем пулса пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пысăк çапăçусемех пулман.

Пирĕн авиаци противникăн мотомехчаçĕсене пыра-пыра çаннă тата унăн аэродромĕсем çине атака тунă.

* * *

Тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕ — фашист Зигберг çумĕнче дневник тупнă. Дневникра çырнисем хĕвелтухăç фронтĕнче «фашистсен авиацийĕ пуçпулса тăнă» çинчен Гитлер мухтанса каланисене çирĕплетсе памаççĕ. Вăл çапла пулмалла та. «Пирĕн дивизи тăватă йывăр çун пурăнса ирттерчĕ,—тесе çырать Зигберг. — Сывлăшран вăйлă тапăннисене пирĕн тŭссе ирттермелле пулчĕ. Паян ирхине 10—15 хĕрлĕ бомбардировщиксем çĕр çумĕпе вĕçсе пирĕн çине атака турĕç. Пирĕн юлашки сехет çитсе килчĕ, тесе шутларăмăр эпир. Вĕсем ултшарăн вĕçсе килсе куç кăçиччен 9 хут атакăларĕç. Халĕ ĕнтĕ 11 сехет те 30 минута, вĕсем вара кунта ултă хут пулчĕç. Тата тепĕр çĕнĕ хыпар: пирĕн полкăн тăватă орудине стройран кăларнă. Вырăс пехотинецĕсем вăл орудисен пĕтĕм прислугине тыткăна илнĕ. 35-мĕш полкри пирĕн батальонăн, 119-мĕш полкăн юлашкисемпе пĕрлештернĕскерĕн, 264 салтакне тыткăна илнĕ. Эпир халлĕхе пехотăпа пĕрле выртатпăр, противникăн çулне шŭлес тесе перетпĕр. Çак хăрушă вăрçă мĕне пĕлтернине халĕ ĕнтĕ эпир те туйса илтĕмĕр. Пире, халлĕхе чĕрĕ юлнисене, турă хĕрхентерех, унсăрăн эпир питех те сахалларăн тăрса юлма пултаратпăр...»

* * *

Майор Тугариновăн противник тылĕнче кĕрешекен отрячĕ тăшман войскисене вăйлăн пыра-пыра çапать. Июлĕн 20-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле вăл С. местечко патĕнче противникăн танковăй ротине аркатса тăкнă. Нимĕçсен 22 салтакне, 15 танкне тата горючи тултарнă икĕ цистернине тытса илнĕ. Майор Тугариновăн отрячĕ темиçе кун хушшинче продовольстви тата горючи тиенĕ 5 обоз туртса илнĕ.

* * *

Летчик-истребитель Цирулин, вăрçă ĕçĕшĕн пысăк вырăн йышăнса тăракан объект тĕлĕнче патруллĕ вĕçевре пулнă чухне, тăшманăн 3 бомбардировщикне асăрханă. Çŭлелле 2 пин метр хăпарса, Цирулин юлташ пĕлĕтсем хыçне пытаннă. Аялти пĕлĕт хушшинчен фашистсен пĕрремĕш бомбардировщикĕ вĕçсе тухсан, Цирулин юлташ пикировка туса ун çине кĕтмен çĕртен вĕçсе пынă та, тăшмана пулеметран темиçе чĕретпе персе тивретнĕ. Çулăм хыпса илнĕ фашистла самолет çĕре татăлса аннă. Тепĕр 10 минутăран нимĕçсен иккĕмĕш бомбардировщикне персе сиенленĕ, вăл анса ларма хăтланнă, анчах уя анса ларнă чухне хăйĕн бомбисемпе пĕрле сирпĕнсе арканса кайнă. Виççĕмĕш летчик, бомбисене вăрман çине пăрахса, каялла вĕçсе кайнă.

* * *

Лейтенант Погудкинăн зенитнăй пулеметсен взводĕ тăшман самолечĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче отлично кĕрешет. Взводăн çапăçу ĕçĕсене çырса пымалли кĕнекинче нимĕçсен 16 бомбардировщикне тата 7 истребительне персе антарни çинчен палăрнă тунă.

* * *

Хĕрлĕ ялавлă Н-ски часть нимĕçсемпе финсен войскисене П. пункчĕ патĕнчен каялла хăвалас янă, вĕсене пысăк çухатусем кŭнĕ. Тăшманăн çапăçу хирĕнче 1.200 çын ытла вилнисем тата нумай аманнисем выртса юлнă. Тăшманăн противотанковăй орудисене, миномечĕсене тата темиçе радиостанцине туртса илнĕ. Картечпа персе фашистсен 300 салтакне яхăн пĕтерсе тăкса, Кожин юлташăн батарейи çапăçура уйрăмăнах палăрнă.

* * *

Разведкăран питех те кирлĕ донесни илсе тавăрăнакан летчик-истребителе Починкова питех те çŭлте 5 «Мессершмитт» çавăрса илнĕ. Противникăн малти машинине персе ŭкерсе, Починков юлташ çĕр çумĕпе вĕçме пуçланă. «Мессершмиттсенчен» пĕри пирĕн истребитель хыççăн вĕçсе пыма тытăннă, анчах йăнăш тунă та çĕр çине пырса тăрăннă.

* * *

Олтеница хулинчен (Румыния) пиллĕк километрта Дунай шывĕ çинче Германин баржи взрыв пулнипе сирпĕнсе кайнă, ун çине снарядсем тиенĕ пулнă. Баржа сирпĕнсе кайнипе нефть тиенĕ икĕ транспорта вут хыпса илнĕ. Пушар пулнипе 6.000 тонна нефть пĕтнĕ.

* * *

Фашизма хирĕç пыракан вăрçа хĕрлĕ Çарпа пĕрле пирĕн халăхăн нумай миллионлă массисем çĕкленсе тăчĕç. Ленинградри Кировскри заводри мастер Рыбаков юлташ, 22 çул каялла Ленинград патĕнче тăшмана çĕмĕрсе тăкнă красногвардеец, халăх ополченийĕн отрядне хăйĕн Сергей ятлă ывăлĕпе, хăйĕн тăваннĕн Глеб ятлă ывăлĕпе, Иван ятлă ывăлпултарĕпе пĕрле пынă. Рыбаков юлташ пек пиншер ветерансем пулеметран пеме, граната ывăтма, штыкпа çапăçма т. ыт. хăйсем те вĕренеççĕ, ополченецсен массисене те вĕрентеççĕ. Халăх ополченийĕнче артиллери ĕçне лайăх вĕреннĕ çынсем те сахал мар. Халăх ополченийĕн ретне тăнă шоферсемпе трактористсем танксене тытса пырас искусствăна ăнăçлăн вĕренсе алла илеççĕ. Фашистсене хирĕç пыракан çапăçусенче халăх ополченецĕсенчен нумай пин çын хăйсем çулăмлă патрпотсем пулнине, тăван çĕршыва хăюллăн хŭтлеппине кăтартса паче тĕ ĕнтĕ,

Халăх хăйĕн çулпуçне саламлать

Июлĕн 21-мĕшĕнче ĕç хыççăн Госбанкра тата спецбанкра ĕçлекенсен митингĕ пулса иртрĕ. Митинга пурĕ 122 çын пухăннă.

Малтанах Киселев юлташ сăмах илет. Вăл СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ халăхсен аслă çулпуçне Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартнине чĕререн ырларĕç. Аслă полководец тата стратег Сталин юлташ ютçĕршыв интервенчĕсене тата белогвардеецсене çĕмĕрсе тăкнă чухне мĕнпур совет халăхне паттăр кĕрешĕве илсе пынă. Вăл ертсе пынипе çак отечественнăй аслă вăрçăра та эпир тăшмана çĕмĕрсе тăкатпăр. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ вăйлăн çапнипе çыхĕнсен Гитлерăн йыткĕтĕвĕсем кашни кунах пиншерĕн пĕтеççĕ. Пусмăра лекнĕ Европăри мĕнпур халăхсем Гитлера хирĕç кĕрешĕве тухаççĕ. Урса кайнă Гитлер нимĕн тума аптăранипе хăйĕн фашистла бандисен юлашки вăйĕсене фронта ярать.

Граждан вăрçин участникĕ Виноградов юлташ Хĕвелтухăçĕпе Кăнтăр фрончĕсенче Сталин ячĕпе пынипе çапăçни çинчен каласа пачĕ.

— Юнĕçен гитлерла бандăсене вилĕм шăтăкĕ патне илсе пыракан Хĕрлĕ Çарпа халăх ополченийĕ сывă пулччăр, — тесе вĕçлет Виноградов юлташ хăйĕн сăмахне.

Ершов тата унăн арăмĕ Прокопьева юлташсем халăх ополченийĕн ретне тăрса телейлĕ пурнăçăн пĕр тумлам юн юлмиччен çапăçма хатĕрри çинчен каларĕç.

Вечтомов юлташ халăх ополченийĕн ретне кĕме ыйтса çыракан заявленисен шучĕ ӳссех пыни çинчен пĕлтерчĕ.

Митингра пулнисем СССР Оборона Халăх Комиссарне Сталин юлташа саламласа резолюци йышăнчĕç.

Сталин юлташ ертсе пынипе, тăшмана çĕнтерме!

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн наукăпа педагогика работникĕсем тата студентсем Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнине чĕререн ырларĕç. Аслă полководец тата стратег Сталин юлташ ютçĕршыв интервенчĕсене тата белогвардеецсене çĕмĕрсе тăкнă чухне мĕнпур совет халăхне паттăр кĕрешĕве илсе пынă. Вăл ертсе пынипе çак отечественнăй аслă вăрçăра та эпир тăшмана çĕмĕрсе тăкатпăр. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ вăйлăн çапнипе çыхĕнсен Гитлерăн йыткĕтĕвĕсем кашни кунах пиншерĕн пĕтеççĕ. Пусмăра лекнĕ Европăри мĕнпур халăхсем Гитлера хирĕç кĕрешĕве тухаççĕ. Урса кайнă Гитлер нимĕн тума аптăранипе хăйĕн фашистла бандисен юлашки вăйĕсене фронта ярать. Тăшман халĕ вăйлине, ăна хирĕç кĕрешме хамăрăн вăя мобилизацилеме кирлине эпир пĕлетпĕр. Анчах та эпир çак вăрçăра куракан çухатусем пĕри те ахаль пĕтменнине те лайăх пĕлетпĕр. Эпир хамăрăн аслă тăван çĕршывăн чыслăхне, ирĕклĕхне сыхлатпăр. Эпир çак вăрçăра çĕнтерни Европăри мĕнпур халăхсене гитлерла пусмăртан хăтарать.

Гитлерла Германие çĕмĕрсе тăкмалли вăхăт сывхарса çитет. Пирĕн аслă çулпуçа Сталин юлташа Оборона Халăх Комиссарĕ туни тата унăн сывăх соратникĕсем Ворошилов, Тимошенко тата Буденный юлташсем фронтсен главнокомандующийĕсем пулни тăшмана çĕнтерессине хăвăртлатать.

(Институт коллективĕн митингĕнче йышăннă резолюцирен).

Юнлă çĕлен-калтасене таптаса лапчăтар

И. В. Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартнă ятпа ВКП(б) Шупашкар хула комитетĕнче ĕçлекенсен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра оргинструкторски отдел заведующийĕ Винокуров юлташ сăмах тухса каларĕ.

— Пирĕн тăван çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăнă вăхăтра Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен руководствине пире пĕр çĕнтерӳрен тепĕр çĕнтерӳ патне илсе пыракан аслă Сталин тăчĕ. Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар фашистла юнлă çĕлен-калтасене çĕнтерӳллĕн çĕмĕрсе тăкĕ. Тăшман вăйлă, анчах ăна йăлтах çĕмĕрсе тăкассине эпир çирĕпĕн шанса тăратпăр. Пĕтĕм совет халăхĕ ополченецсен ретне тăрать, — терĕ Винокуров юлташ.

— Эпĕ Военкомата мана фронта яма ыйтса заявлени патăм, — тет партбюро секретарĕ Никитина юлташ. — Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартни пире татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать. Эпир тăшмана çĕнтерессе çирĕпĕн шанса тăратпăр.

Никитина юлташ халăх ополченийĕн ретне йышăнма ыйтса шанă юлташсен заявленийĕсене вуласа парать.

Митингра Н. Григорьева тата Плэтнева юлташсем сăмах тухса каларĕç.

— Эпир, — теççĕ вĕсем, — пире фронта яма ыйтса заявленисем патăмăр. Çавăн пекех пире халăх ополченийĕн ретне йышăнма ыйтатпăр.

Митингра тухса калакансем пурте Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартнине саламлаççĕ, пурте Сталин юлташ ертсе пынипе тăшмана тăван çĕршывран тасатма халăх ополченийĕн ретне йышăнма ыйтаççĕ.

Акă мĕн çырать 58 çулхи А. Воробьева юлташ хăйĕн заявленийĕнче: «Эпĕ иртнĕ вăхăтсенче санитарка пулса ĕçленĕ, унтанпа чылай вăхăт иртрĕ пулсан та, вăл ĕçе аван пĕлетĕп, аманнисене пулăшу пама пултаратăп. Мана халăх ополченийĕн ретне йышăнма ыйтатăп. Эпĕ 58 çулта пулсан та ĕçлеме, мухтавлă Хĕрлĕ Çара, тăван кивăлăмăрсене пулăшма манăн вăй çителĕклĕ. Фашистла çĕлен-калтасене тĕп тăвар! Сывă пултăр Сталин юлташ!»

— Манăн икĕ ывăл Хĕрлĕ Çарта. Мана та халăх ополченийĕн ретне йышăнма ыйтатăп. Эпĕ хамăн ывăлсемпе пĕрле урса кайнă фашистсене çĕмĕрсе тăкнă çĕрте пĕрле пулăшăн, — тет библиотека заведующийĕ Кедрова юлташ.

Митингра пулнă пур сотрудниксем те заняти пĕтнĕ çĕре халăх ополченийĕн ретне йышăнма ыйтса заявленисем пачĕç.

Митингра йышăннă резолюцире аслă Сталина СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартнине хĕрӳллĕн саламлаççĕ.

В. КАРЗАНОВ.

Июлĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле нимĕç самолечĕсем Мускав çине пырса тапăнни

Июлĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле нимĕç самолечĕсем, 150 самолета çити, Мускав çине çĕнĕрен массăллăн пырса тапăнма хăтланнă. Зенитнăй батарейăсем заградительнăй майпа персе тăни тата çĕрлехи истребительсем противникăн тĕп вăйĕсене Мускав патне пыма паман.

Тăшман самолечĕсенчен нумайĕшĕ Мускав патне вĕçсе çитеймесĕрех бомбăсене ăста кирлĕ унта пăрахнă. Хула патне уйăм самолетсем кăна, 8—10 самолетран ытла мар, вĕçсе пынă.

Çар объекчĕсене сиен тăвайман. Пурăнмалли çуртсенче темиçе çĕрте пушар тухнă, вĕсене пожарнăй частсемпе хулари çынсем хăвăрт сӳнтернĕ. Çынсем хушшинче вилнисемпе аманнисем пур.

Нимĕçсен темиçе самолетне персе антарнă. Персе антарнă самолетсен хисепне тĕплĕн палăртаççĕ. Пирĕн авиацин çухатусем пулман.

Вăрçă вăхăтĕнчи агитациллĕ ĕç

ÇЕМĔРЛЕ. Политикăллă агитаци ĕçĕн ролĕ яланах пысăк вырăнта пулнă. Хальхи вăхăтра, вăрçă пынă чухне, политикăллă агитаци уйăрмах вăйлă пулмалла.

Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхозари пуçламăш парторганизаци хăйĕн ĕçне тĕпренех улăштарса, «Пурне те фронтăшăн, пĕтĕм вăя Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ флота пулăшма» текен лозунгпа туса пыма пуçларĕ.

Парторганизацинчи кашни коммунист хăй вырăнче ответлă. Вĕсене бригадăсем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем хăйсен бригадисенче агитаци ĕçне туса пыраççĕ.

Фашистла Германия пирĕн çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăннă хыççăн мĕнпур учрежденисене, халăх нумай пухăнакан вырăнсене фашистла Германие хирĕç вăрçма чĕнекен лозунгсемпе плакатсем çакнă.

Колхозăн вулав çурчĕ ку тĕлĕшпе пысăк ĕç тăвать. Вулав çурчĕн заведующийĕ Я. Власов юлташ вулав çурчĕ умĕнче, урамра, «Правда» хаçатăн витринине организациленĕ. Хаçата кашни кун улăштарса тăраççĕ. «Правда» çинчи Совет Информбюро пĕлтернине куллен темиçе вунă çын пырса вулаççĕ.

Фронт линийĕсене пăхса пыма вулав çуртĕнче тата ялсовет канцелярийнче пысăк карттăсем çакнă.

Пуçламăш парторганизацин секретарĕ М. Михайлов юлташ колхозниксене Совет Информаци Бюровĕ паракан пĕлтерӳсене вуласа ăнлантарса парать. «Правда», «Красная Чувашия», «Чăваш Коммуни» хаçатсем тăрăх Хĕрлĕ Çар фашистла бандăсене хирĕç паттăрăн çапăçни çинчен калакан статьясене вуласа парать. И. Данилов, Н. Моляков, Н. Тарасов, В. Капитонов, И. Фадеев коммунистсем те колхозниксем хушшинче массăллă-ăнлантаруллă ĕçе куллен туса пырса, колхозниксене Хĕрлĕ Çара пулăшма мобилизацилеççĕ.

Коммунистсем пур ĕçре те малта пыраççĕ. Е. Тихонов тата М. Сохоров юлташсем хăйсен ирĕкĕпе фронта тухса кайрĕç. Коммунист Н. Мозяков юлташ Ленин ячĕпе тăракан колхоза 5 çул ертсе пырать. Вăл ертсе пыракан колхоз районри вăйлă колхозсенчен пĕри. Вăйлă тырпул ешĕрсе çитĕнет. Çурхи тырăсене икшер хут çумланă. Утăна пухса кĕртсе, капана хывнă, государствăна аш-какай, утă, çăм тăратас çулталăк планне тултарнă. 200 центнер тырă панă. Сĕт парас плана 75 процент тултарнă. Вăйлă тырпула пухса кĕртме хатĕр. Машинăсем, урапасем, михĕсем, шăналăксем çителĕклĕ. Тырпула пухса кĕртме план туса кашни бригада, колхозник патне çитернĕ.

Коммунист В. Капитонов юлташ — иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ. Вăл ертсе пыракан бригада лайăх ĕçлет.

Коммунист М. Мурза—колхозри стахановец. Вăл хăйĕн ĕç нормисене ялан 150—200 процент тултарать. Утă çулнă вăхăтра куллен 1,25 гектар çулса хăйĕн нормине 150 процент тултарнă. Колхозниксемпе калаçусем ирттерет, хаçатсем вуласа парать.

Колхоза тырпула пухса кĕртме ялти интеллигенци тата шкулта вĕренекенсем пулăшаççĕ. Учительсем утă çулнă, пахча-çимĕç тунă тата ытти çĕрте ĕçлеççĕ.

60 çулхи ватă учитель С. И. Федоров юлташ хăйĕн вăйĕ çитнĕ таран колхоз производствинче ĕçлет.

«Сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланма пурне те обязательнăй ĕçкепе вĕрентесси çинчен» СССР Совнаркомĕ йышăннă постановлени тăрăх колхозниксемпе колхозницăсем стрелковăй, санитарный, ПВХО, наблюдательнăй группăсем организациленĕ.

С. БАТЬКОВ.

Ачасен бригадисем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Еншик Чуллă ялсоветĕнчи «Победа» колхозри çамрăк ачасем колхоза пысăк пулăшу параççĕ. Ачасем хăйсем ятларласа бригада тунă. Çак бригада пахча-çимĕçсене пăхса ӳстерет. Яманакри «Красное Сормово» колхозра çамрăк ачасем пурçăн хуртне пăхса ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи ополченецсен группи.
А. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

РАЙОНРИ ХАÇАТСЕМ ТĂРĂХ

ФРОНТА КАЙНИСЕМ ВЫРĂННЕ

— Кăçал Сĕнтĕрвăрринчи машинно-тракторнăй станцинче хĕрарăмсен трактор бригадине организациленĕччĕ, —тесе çырать районри «Ударник» хаçат. —Вăл бригадăра пĕлтĕр трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухнă 8 хĕрача ĕçлет.

Малтанхи хунсенчех бригадăри трактористкăсем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеме тытăнчĕç, вĕсен бригади машинно-тракторнăй станцинче мала тухрĕ: хĕрарăмсен бригади çураки ĕçĕсен планне 111 процент, çĕртме тумалли плана 148 процент тултарчĕ.

— Паян, — тет хаçат, — тăван çĕршывăн патриотикисем хăйсен мухтавлă ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ. — Хĕрарăмсене тракторпа ĕçлеме вĕренме чĕнсе, «Ударник» хаçат ятларласа страница кăларнă. Вăл страницăра МТС-ра ĕçлекен трактористкăсемпе комбайнеркăсем районри хĕрачасене хăйсен юратнă профессийĕ çинчен каласа параççĕ.

Трактористка Е. Кузьмина çапла çырать:

«Пĕтĕмпех фронта валли, — фашизма çĕмĕрсе тăкма, — çакăн пек совет патриочĕсен шухăш-кăмăлĕсем. Фронта тухса кайнă арçынсем вырăнне ĕçе хĕрарăмсем тăраççĕ. Пирĕн МТС-че малтанах хĕрарăмсем сахалччĕ, халь вĕсем вунтарăн шутланаççĕ. Колхоз хĕрĕсем кашни кунах пирĕн бригадăна пырса хăйсене тракторпа ĕçлеме вĕрентме ыйтаççĕ.

Иккĕмĕш çул ĕнтĕ эпĕ колхоз уйăрĕсем тăрăх хурçă лашана тытса пыратăп. Хамăн профессине мухтанса савăнатăп. Çуракинче тата çĕртме тунă вăхăтра кашни кунхи нормăна 130—150 процент тултарса ĕçлерĕм пулсан, малашне 200 процентран кая мар тултарса ĕçлеме пулатăп. Эпир, трактористкăсемпе комбайнеркăсем, колхозлă уйăрти вăйлă тырпула кĕске вăхăтрах пысăк пахалăхпа пуçса кĕрсе, тăван Хĕрлĕ Çара çапăçу фрончĕсенче çĕнтерӳ тума пулăшатпăр.

— Манăн юратнă професси — тракторист пуласси,—çырать трактористка Т. Вершкова юлташ. — Пирĕн МТС-чи чылай трактористсем çĕршывăн çапăçма фронта туха кайрĕç. Çапах та пирĕн МТС-че ĕç хăвăртлăхĕ чакмарĕ, вăл нихçанхинчен вăйлăн ӳссе пырать. Эпир, трактористкăсем, хамăрăн ĕçри вăй-хала темиçе хут ӳстерсе ĕçлеме тытăнтăмăр, хамăрăн тата фронта тухса кайнă юлташсен нормисене ытлашшипех тултарасшăнăн кĕрешетпĕр.

Çавăн пекех, «Ударник» хаçат комбайнерка Просвиркина, трактористка Иванова юлташсен çырăвĕсене пичетлесе кăларнă. Вĕсем те ӳкхир ĕçĕнче пĕтĕм вăйхала хурса ĕçлени çинчен çыраççĕ.

Трактористкăсем, комбайнеркăсем хаçат урлă колхозсенчи хĕртантăшсене хăйсен юратнă профессийĕпе ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ тата вĕсене тракторпа ĕçлеме вĕренме чĕнеççĕ.

«Ударник» хаçат çавăн пек страницăсене кăларса лайăх ĕç тăвать. Вăл кун пек материалсем час-часах пичетлет.

Районри хаçатсене пурне те, «Ударник» хаçат пек, ĕç фронтĕнчи паттăрсен, совет патриочĕсен мухтавлă ĕçĕсене тĕплĕнрех çутатма сĕнмелле.

Учительсемпе вĕренекенсем ĕçре

ЕТĔРНЕ. Фашистла вăрă-хурахсене хирĕç хаяр çапăçусем пынă вăхăтра пирĕн совет халăхĕн патриотизмĕ, вăл хăйĕн тăван çĕршывне вĕçĕмсĕр юратса хисепленни уйăрăмах уçăн палăрать. Пĕтĕм совет халăхĕн ĕмĕчĕ-шухăшĕсем тăван çĕршыва сыхласси çинче, пирĕн таса çĕре хăйсен юнлă ури-аллисемпе варалама пикенекен сĕмсĕр вăрă-хурахсене çĕмĕресси çинче. Çак вăрçăн ывăр кунĕсенче кашни ĕççыннин хăйĕн тăван çĕршывне усăллă пулма, çĕршыв тĕрекĕшĕн пĕтĕм вăйне пама тăрăшать.

Районри учительсем, студентсем, аслă классенче вĕренекенсемпе шкул ачисем шакал Гитлер пирĕн çĕршыв çине çараттулă, вăрă-хурахла вăрçăпа килнине хирĕç ответлесе шкулсене чăн-чăн оборона крепоçĕ тăвассишĕн тăрăшаççĕ, хамăрăн хăватлă та паттăр Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшаççĕ, çĕнĕ вĕренӳ çулне нихăçанхинчен те кăтартуллă хатĕрленеççĕ, колхоз производствинче, çулăĕр строительствинче активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ, колхозниксене вăрçă ĕçне вĕрентеççĕ.

Ирçери тата Пушнарти туллимар вăтам, Кăташри пуçламăш, Етĕрнери вăтам шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулĕ валли учебниксем, нагляднăй пособисем, хут-карандашсемпе ручка-перосем çителĕклĕ илсе хатĕрленĕ. Ку шкулсенче шкул çурчĕсене, кăмакасене, партăсемпе доскасене çине тăрсах юсаççĕ. Шкул çулне çитнĕ ачасене шута илсе тухнă. Вĕренӳ çулĕ валли вутă хатĕрлес ĕç те аван пырать. Пушнарти туллимар вăтам шкул (директорĕ И. Кутузов) çĕнĕ вĕренӳ çулĕ валли 60 кубла метр вутă турттарнă, 30 кубла метр илсе хатĕрленĕ. Етĕрнери вăтам шкул 80 кубла метр турттарнă, 40 кубла метр сутăн илнĕ, 70 кубла метр вăрманта хатĕрленĕ.

Июлĕн 18-мĕшĕнче Етĕрне, Мăн-Сĕнтĕр, Сареево подрайонĕсенче учительсен пухăвĕсем пулса иртрĕç. Пухусенче учительсем пĕр сасăпах хăйсен вăйĕпе 1941—42 вĕренӳ çулĕн пĕтĕм сезонĕ валли вутă хатĕрлеме йышăнчĕç. Июлĕн 21-мĕшĕнче районри пур шкулсенчи учительсем те хăйсен шкулĕсем валли вутă хатĕрлеме тытăнчĕç.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне тимлĕн хатĕрленнипе пĕрлех учительсемпе вĕренекенсем колхоз производствинче тăрăшса ĕçлеççĕ. Кузнецов учитель каникул вăхăтĕнче Вăрманкас Ядринори «Дружба» колхозра ирĕклĕ пожарнăй дружинăн начальникĕ пулса ĕçлет. Е. Иванов учитель «Пионер» колхозра пур ĕçе те активлăн хутшăнать. Вăл колхоз хирне 34 лав тислĕк кăларнă. Улăхри ĕçсем вăхăтĕнче III-мĕш бригадăн поварĕ пулса ĕçлерĕ. Кун пек тĕслĕхсене вуншарăн илсе кăтартма пулать.

Çавнашкалах аслă классенче вĕренекенсем, шкул ачисем колхозсенче пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Етĕрнери вăтам шкулти 9-мĕш класра вĕренекен И. Кудряшов Хĕрлĕ Çара кайнă С. Сынков вырăнне вулав çурчĕн заведующийĕ пулса ĕçлеме юлнă. Вăл хăйĕн ĕçне тивĕçлипе туса пырать. Ку шкулта вĕренекенсем: Н. Михайлов, А. Тихонов, Е. Иванова, С. Михайлова «Пионер» колхоза çум çумланă, уя тислĕк кăларнă тата утă çулнă вăхăтра кулленхи нормăна яланах ирттерсе тултарнă. «Пионер» колхозра çум çумланă çĕре 48 вĕренекен, хире тислĕк кăларнă çĕре 32 вĕренекен хутшăннă.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

ВАРНАР. Комсомолецсемпе пионерсем тăван çĕршывăн оборонине çирĕплетме пур майсемпе те пулăшаççĕ. Кĕçĕн Кипекри комсомолецсемпе пионерсем çак кунсенче 10 тонна тимĕр-тăмăр пухнă. Чарăклăри туллимар вăтам шкулри учениксем 5 центнер пухса панă.

В. ЦЫПЛЕНКОВ.

Мĕнпур предприятисене вăйлăн ĕçлеттерер!

Пирĕн аслă тăван çĕршывăн миллионшар ывăлĕсем этемлĕхĕн хаяр тăшманне — Германин юн ĕçсе тăранайман фашизмне хирĕç хăюллă çапăçаççĕ. Совет халăхĕ фашистла ирсĕре пĕтерсе тăкса, ăна çĕр пичĕ çинчен шăлса пăрахма тупа турĕ. Вăл хăйĕн сăмахне пурнăçлатех. Мĕншĕн тесен, совет халăхĕ, ваттисем те, çамрăккисем те, нихăçан пулман героизм кăтартса ĕçлеççĕ.

Совет Информаци Бюровĕн сводкисенче, Хĕрлĕ Çар геройĕсен чаплă ĕçĕсем çинчен пĕлтернипе пĕрлех, тыла юлнă рабочисем производствăра тунă пысăк ситĕнӳсем çинчен те каласа параççĕ. Акă, июнĕн 30-мĕшĕнчи кăнтăрлахи пĕлтерӳре Ленинградри машиностроительнăй заводсенчи рабочисем пĕтĕм вăйхала хурса паттăрла ĕçленĕ фактсем илсе кăтартнă.

«Макс Гельц ячĕпе тăракан заводра стахановец-механик Тянт юлташ, ответлă механизмсен сборкине пĕтермесĕр, виçĕ талăк хушши заводран тухмасăр ĕçленĕ. Çакăн хыççăн виçĕ сехет кансан, вăл хăйĕн ĕçри юлташĕсене пулăшма пуçланă.

Ленин ячĕпе тăракан машиностроительнăй заводра котельщик Боробьев юлташ Хĕрлĕ Çар ретне тухса кайнă 4 рабочишĕн пĕчченех ĕçлесе ĕлкĕрет. Мастер Антонов юлташ хăйĕн подручнăйĕпе Башмаков юлташпа пĕрле, агрегат çумне оригинальнăй приспособлени туса, çав агрегатăн тухăçлăхне чылай ӳстернĕ, çакă вăл çара тухса кайнă 5 рабочине улăштарма май пачĕ».

Ĕçри паттăрлăхсем çинчен, çар ĕçĕнчи геройла эпизодсем пекех пĕлтернĕ факт — вăл усал тăшмана çĕнтерес çĕрте тыл мĕн пек пысăк вырăн йышăнса тăнине лайăх кăтартса паратъ.

Июлĕн 3-мĕшĕнче пĕтĕм совет халăхĕ хамăрăн çулпуç, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ çăмахне итлерĕç. Сталин юлташ çĕршывăн хальхи вăхăтри положенине çав тери тĕплĕн каласа пачĕ. Пирĕн аслă тăван çĕршыв умне пысăк хăрушлăх килсе тухрĕ. Фашистла атă пирĕн государство чикки урлă каçса пусрĕ, вăл совет уйăрĕсене, совет çĕрне таптать. Гитлер, сăнчăртан вĕçеренсе кайнă урнă тискер кайăк пек, пирĕн аслă çĕршыв çине сиксе ӳкрĕ, вăл пирĕн çĕршывăн ырлăхĕпе пуйса пурăнасшăн.

Фашистсен урнă йыттисене пĕр майпа çеç лăплантарма пулать, — вĕсене вĕлерсе, таптаса, сунтарса ярса ĕмĕрлĕхех пĕтерсе хумалла.

Вăйлăн хĕçпăшалланнă гитлерла банда иккĕмĕш çул ĕнтĕ Европăра тискеррĕн вăрçать, çав икĕ çул хушшинче вăл пирвайхи хут вăйлă противникпа — Хĕрлĕ Çарпа хире-хирĕç тăрса çапăçать. Нимĕçсен фашистла çарĕн чи лайăх дивизийĕсене тата авиаци чăсĕсене пирĕн Хĕрлĕ Çар çĕмĕрсе тăкрĕ те ĕнтĕ. Анчах тăшман, хăй пысăк çухатусем кунине пăхмасăрах, çапăçăва çĕнĕрен çĕнĕ вăйсем кĕртсе ярать. Хăрушлăх çав тери пысăк, пирĕн лăпланса ларма юрамасть. Тăшман тапăнăвне сирсе пăрахма, унтан ăна çĕмĕрсе тăкас тесен, пирĕн хамăрăн вăя çĕр хут ӳстермелле. Ăна тума çынсем тата хĕçпăшал кирлĕ. Хĕçпăшалсем пур енĕпе те тата пур тĕсли те кирлĕ! Пирĕн вĕсене нумай хатĕрлемелле, фашистла тискерсем çине çăвакан вутлă çăмăр вăйĕ кашни кун, кашни сехетре, кашни минутăра ӳссе пыма пултартăр.

Сталин юлташ хăйĕн сăмахĕнче çапла каларĕ:

«Эпир Хĕрлĕ Çар тылне тĕреклетме тивĕç, хамăрăн пĕтĕм ĕçе çав ĕçĕн интересĕсене пăхăнтармалла, мĕнпур предприятисене вăйлăн ĕçлеттермелле, винтовкăсем, пулеметсем, орудисем, патронсем, снарядсем, самолетсем нумайрах туса кăлармалла».

Çакă вăл совет труженикĕсен пĕтĕм çарне тивекен боевой приказ. Сталин юлташ пире çапла хушрĕ: «пирĕн çынсем, совет çынниссем, пирĕн çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăха пĕтĕмпех ăнланса илмелле, йăваш чунлă пулма, тимсĕрлĕхлĕ пулма пăрахас пулать; вăл шухăш-кăмăлсем вăрçăвченхи вăхăтра пулма пултарнă, анчах халăхи вăхăтра, положенине вăрçă тĕпренех улăштарнă чухне, вĕсем пысăк инкек кӳме пултараççĕ».

Пирĕн халăх, пирĕн рабочисем тата инженерсем пĕтĕм вăй-хала хурса, пĕтĕм чĕререн тăрăшса ĕçлеççĕ, вĕсем Хĕрлĕ Çарăн вăй-хăватне тĕреклентме, ăна валли ытларах хĕçпăшал, боеприпассем, ăна мĕн кирлине пĕтĕмпех туса пама тăрăшаççĕ.

Малтан нимĕнпе палăрса тăман çĕртер, пиншер рабочисем халь социализмла ĕçĕн çĕнĕ образецĕсене кăтартма, хăйсен ĕç нормисене ик-виç хут ирттерсе тултарма тытăнчĕç. Станок умĕнчи рабочисем хăйсен нормисене çеç мар тултараççĕ, çавăн пекех тата вĕсем фронта тухса кайнă юлташĕсен нормисене те тултарса пыраççĕ. Заводсенче, фабрикăсенче рабочисем тăшмана çĕнтерме мĕн кирлине пĕтĕмпех тăвас тесе хăйсен вăйне, сывлăхне, пурнăçне шеллемесĕр ĕçлени çинчен калакан примерсем пиншер илсе кăтартма пулать.

Предприятисем чылайăшĕ çĕнĕ тĕслĕ продукцисем туса кăларма тытăнаççĕ. Вăл продукцисене йышлăн кăлармалла. Çав продукцисене туса кăларас çĕрте технологи пирки тĕплĕн шухăшласа пăхмалла. Çавăн пек продукцисем туса кăларакан заводсем хăйсен опычĕсене ытти заводсене хăвăрт памалла. Акă ĕнтĕ ăста вăл пĕр вăхăтрах нумай детальсем туса кăлармалли, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли майсем.

Тăшман пирĕн çурта тискеррĕн килсе кĕчĕ пулсан, пирĕн кашни сехетре ытларах продукци туса кăлармалла, кашни станокпа ытларах усă курмалла тăвас пулать, пĕтĕм ĕçе çак енĕпе туса пымалла.

Кашни рабочи, кашни мастер, кашни технолог унăн станокĕ çинче, унăн цехĕнче технологи мĕнле пулмаллине тĕрĕслесе тухтăр. Ĕçе çавăн пек организацилер: халиччен пĕр деталь туса кăларма кирлĕ пулнă вăхăт хушшинчех малашне вунпăр деталь туса кăлармалла тăвăр! Станок вăйĕпе пĕтĕмпех усă курăр!

Станок çине ытларах детальсем лартăр, станоксем çинчи инструментсен йышне ытларах ӳстерĕр!

Станок металл каснă вăхăтпа тепĕр ушкăн детальсем хатĕрлес çĕрте усă курăр. Çакна яланах асра тытăр: фашизма хирĕç çапăçу пынă вăхăтра кашни минута, кашни секунда хаклă. Планран ирттерсе тултарнă кашни ытлашши процент — вăл тăшмана пырса çапни. Планран ирттерсе тултарнă кашни ытлашши процент пире çĕнтерӳ патне сывхартать.

Çара хĕçпăшаллантарма кирлĕ япаласем туса кăларассине ӳстерес çĕрте усă курма май пур мĕнпур оборудованине пĕтĕмпех туллин усă курас пулать. Станок пĕр сехет те ахаль ан тăтăр! Вăрçă вăхăтĕнче станока ахаль тăратни — вăл тăван çĕршыв умĕнче преступлени туни пулать.

Халь пирĕн умра пĕр задача—фронта валли пур продукцисене те ытларах парас задача тăнă вăхăтра, производстве ĕçне организацилес ыйту уйăрăмах пысăк вырăн йышăнать. Производство процесне тĕплĕн шухăшласа организацилени тата ăна пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пыни — акă мĕн сахал вăй тата средство хунипех ытларах продукци пама пултарать.

Организациллĕх, организациллĕх, татах тепĕр хут организациллĕх! Акă мĕн кирлĕ пире çĕнтерӳ тума.

Юлташсем — производство командирĕсем! Станоксене пĕтĕм сменăра пĕр чарăнмасăр ĕçлемелле туса хурăр. Рабочине тухăçлă ĕçлеме кирлисем пурте пур-и, ихĕ хут, виçĕ хут тĕрĕслесе пăхăр: унăн сырье хатĕрĕсемпе инструментсем пур-и, станок йĕркеллĕ-и, станок патĕнчен аяккалла каймалла мар-и, ăна лайăх каласа ăнлантарнă-и? Оборудованисем мĕнлине яланах асăрхаса тăрăр. Сисĕмлĕх ытларах пултăр, станоксене пĕр чарăнмасăр ытларах ĕçлеттерме тăрăшăр! Халь пирĕн станоксене капиталлăй ремонтлама çĕнĕ çеç станоксем кирлĕ. Ĕç вăхăтне станока асăрхасах тăрăр, унăн кашни сассине тĕплĕн итлесе пырăр, пĕр станока та стройран тухма ан парăр. Хĕрлĕ Çара хĕçпăшаллантармалли япаласем туса кăларакан станоксене сыхласа усрăр. Ĕç вырăнĕнче тасалăха пăхăнăр.

Инструментсене тĕплĕн сыхласа усрăр! Унпа йăлтах усă курăр. Астăвăр: инструмент — пысăк пахалăхлă хурçă, вăл фронта валли кирлĕ.

Материалсене сыхласа усрăр! Кашни тонна сырьеран ытларах продукци илер.

Брака хирĕç вăрçă! Çак кунсенче брак туни — преступлени! Брак фронта кирлĕ ресурссене çисе ярать.

Рабочисен массисен хастарлăхĕ пысăк, вĕсен патриотла çăкленĕвĕ сарăлсах пырать. Совет халăхĕ хăй çĕнтерессе шанса тăрать, вăл çĕнтеретех. Вунпăр пин çын паян кашни ик сыпшăн, виç сыпшăн ĕçлет. Пирĕн халăх ылханлă тăшмана çĕмĕрсе тăкассишĕн çĕнĕ жертвăсем тума хатĕр. Кирлĕ пулсан, пирĕн рабочисем вуна сыпшăн ĕçлеме те пултараççĕ. Çĕнтерӳ пирĕнте. Эпир ăна кашни сехетре, кашни минутăра туса пыратпăр.

Пирĕн çĕнтерӳре фронтри геройсем кӳреççĕ. Çавăн пекех, çĕнтерӳре тылра та — станок çинче те тăваççĕ. Фронтри геройсем тылри геройсемпе аллаллăн тытăнса çапăçаççĕ, халăх вĕсене иккĕшне те пĕр пекех юратать. Вĕсен ĕçне, вĕсен паттăрлăхне ĕмĕр-ĕмĕр манмĕç. Этемлĕхĕн чи хаяр тăшманне — фашизма пĕтерсе хума хăйсен пурнăçне шеллемесĕр хĕçпăшал туса хатĕрленĕ паттăрсен ятне асăнса çаласси ăруран ăрăва куçса пырĕ!

И. ГУДОВ.
СССР Верховный Совечĕн депутачĕ

Пур ĕçе те фронт интересĕсене пăхăнтарар!

Коммунист ертсе пыракан колхозра

Анатри Кипекçери «Ĕмĕт» колхоз иртнĕ çулта гектартан вăтам шутпа 16,6 центнер тĕштырă пухса илчĕ. Колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне 4,76 килограмм тĕштырă, 2,8 килограмм çĕрулми тата 52 пус укçа валеçнĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем кăçал гектартан 20 центнертан кая мар тĕштырă пухса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Агротехника мероприятийĕсене йăлтах пурнăçласа пынă; çуртри аван шăтса тухрĕ. Уйхирте ыраш та, çуртрисем те лайăх ӳсеççĕ. 62,35 гектар лаптăк çинчи çуртрине çумкурăксенчен тасатнă.

Колхоз кĕракине хатĕрленме тахçанах тытăнчĕ. 112 гектар лаптăка ирхи çĕртме тунă, 3 пин лав тислĕк кăлаонă тата ыраш вăрлăхне 190 центнер ытла сортласа кондицине ситернĕ.

Лайăх ӳсекен тырпула сыхлас ĕçе колхоз аван йĕркеленĕ. Хуралçăсем çирĕп сыхлаççĕ, тырпул çине пĕр выльăх та кĕртмеççĕ. Кунта общественниксем пурлăха сыхлас ĕçе те аван йĕркеленĕ. Вут-кăвар сӳтермелли инвентарьсем çителĕклĕ, пурте юсавлă, кашни кил умнех шыв лартнă.

Колхозниксемпе колхозницăсем умĕнче пысăк ыйту — лайăх ӳсекен тырпула кĕске вăхăтра пĕр тăкаксăр пухса кĕртес ыйту тăрать.

Колхоз правленийĕ уборка планне туса хатĕрленĕ. План тăрăх колхозăн кăçал 104 гектар çинчи ыраша 6 кун хушшинче, 193 гектар çинчи çуртырринче 7 кун хушшинче пухса кĕртмелле. Колхоз правленийĕ ĕçе хĕрарăмсемпе шкул ачисене ытларах явăçтарма тата машинăсемпе кирлĕ пек усă курма палăртрĕ.

Колхозницăсене пурне те ĕçе явăçтарас майпа ача ясли уçма тата столовăй организацилеме палăртнă. Ялĕ валли 12 центнер тулă, столовăй валли 15 центнер çăнăх хатĕрленĕ. Çĕрулми, аш-какай тата сĕт-çу çителĕклĕ.

Колхозницăсем тырă вырнă чух килте ача пăхса тата апат-çимĕç пĕçерсе тăмаççĕ. Вĕсем ирех тăраççĕ те, ачисене ялĕне леçнĕ хыççăн, хире тухса каяççĕ.

Колхозăн пĕтĕмпе 4 жнейка, 5 молотилка, 4 сеялка тата триер пур. Колхоз правленийĕ машинăсене тахçанах юсаттарнă. Унсăр пуçне ута çулмалли машинăпаран лобогрейка тунă. Çурласемпе çавасем, креплесемпе шăпăрсем, михĕсем т. ыт. те хатĕр.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă хыççăн колхозниксемпе колхозницăсем мирлĕ строительство вăхăтĕнчи шухăш-кăмăлсене пăрахса татах та лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Фронта пулăшас майпа колхозниксемпе колхозницăсем государствăна сĕт-çу парса татрĕç. Çавăн пекех заем укçине те срокченех тӳлерĕç. Колхоз паянхи куна кăçалхи обязательство шучĕпе государствăна 159 центнер тĕштырă, 23 центнер ашкакай, 15 пин тенкĕ подоходнăй налог тӳлерĕ. Сĕт-çу тата çăмарта пĕтĕмпех парса татрĕ.

«Ĕмĕт» колхоз районра малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланать. Ку колхоз кăçал та тырпула кĕске вăхăтра пĕр тăкаксăр пухса кĕртессишĕн кĕрешет.

Çапла ĕçлет коммунист Тихонов юлташ ертсе пыракан «Ĕмĕт» колхоз.

ÇЕРПУ. («Чăваш Коммуни» корр.).

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шупашкарти автомобильсем юсакан заводри тимĕрçе-стахановец А. Бронников юлташ, кулленхи нормăна 150 процент ытла тултарса пырать.

Е. Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Йăлтах фронт валли

СĔНТĔР. Матикассинчи атă-пушмак çĕлекен «Кожевник» артельте ĕçлекенсем Германин хура çăханĕсене хирĕç çапăçакан паттăр Хĕрлĕ Çара, Тинĕс-Çар Флотне тата Авиацине пулăшса пырас майпа пĕтĕм вăй-хала курса ĕçлеççĕ, ĕç тухăçлăхне кулленех ӳстерсе пыраççĕ. Артель июлĕн çуруйăхĕнчи планне 145 процент тултарнă.

Муркаш ялсоветĕнчи «Авангард» колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултараççĕ. Колхоз 1941 çулăн государствăна 168 центнер тĕштырă леçсе пачĕ. Çăмарта, çăм памалли обязательствăсене те пĕтĕмĕшпех тултарнă. Пашалукасси ялсоветĕнчи колхозниксем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заем укçине пĕтĕмпех тӳлесе тăрĕç.

П. ЯРГУНЬКИН.

Телейлĕ пурнăçшăн вăрçа!

Вăрçа çĕкленĕр, тăвансем,
Тĕп пулччăр ирсĕр фашистсем!

Пурте пĕр харăссăн тăрар,
Хăватлă пултăр Хĕрлĕ Çар!

Юлташ, ӳхир çынни пулсан,
Унта та фронт, унта ĕç сан.

Сĕткенлĕ утă çитерсен
Тĕреклĕ пирĕн лашасем.

Вĕсем чупаççĕ сиккипе, —
Тăшман пĕтет çумкурăк пек.

Ĕçле канмасăр пусăра,
Ан пăл ире те кăнтăра.

Эс пана çăкăр вăрçăра
Пăшал та бомба пек тăрать.

Канса выртсассăн, — тăшмана
Паратăн пулăшу кăна!

УХСАЙ ЯККАВĔ.

Стахановла ĕçлесе Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ

Белков Платон Хĕрлĕ Çара кайничен Йĕпреç районĕнчи «Социализм» колхозра хастарлă ĕçленĕ. Вăл иртнĕ çулта пурĕ 311 ĕçкунĕ тунă. Кăçал — Хĕрлĕ Çара иличчен — 113 ĕçкунĕ тунă. Белков примерлă ĕçлесе пынă. Иртнĕ çуракинче вăл сеялкăпа тырă акнă. Вăл çуракинче нормăна кулленех 130—140 процент таран тултарса пынă.

Ялсовет председателĕ Семенов Хĕрлĕ Çара каймалли çинчен пĕлтерсе Белков юлташа повестка панă. Повестка илнĕ хыççăн вăл тăван çĕршыва сыхлама, хамăр çĕршыв çине вăрăхурахла килсе тапăннă ирсĕр тăшмана çапса аркатма паттăрăн çапăçма пулса тупа тунă. Колхозниксемпе колхозницăсем стахановец Белков юлташа Хĕрлĕ Çара ăсатнă чух производствăра хастарлăрах ĕçлеме, оборона ĕçне вăйлатма, тыла çирĕплетсе пыма сăмах панă. Халĕ Белков действующи çарта, пирĕн социализмлă кĕршыв çине килсе тапăннă тăшмана хирĕç çапăçать. «Социализм» колхоз членĕсем стахановла вахтăра. Вĕсем стахановла ĕçлесе Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота çĕнтерӳ тума пулăшаççĕ. Колхозниксем 14 гектар çинче çурхи тулăна, 13,5 гектар çинче кĕрхи тулăна, 10 гектар çинче сĕлĕне, 6 гектар çинче пăрçана çумкурăксенчен тасатнă. Кăçал, çанталăк нӳрĕ пулнă май, тырпулсем ăнса пулчĕç. Колхозниксем агротехникăллă ĕçсене аван туса пычĕç. Уйра кашласа çитĕнекен вăйлă тырпул колхозниксен пархатарлă ĕçĕн результатчĕ. «Социализм» колхоз икĕ жнейка, тепĕр лобогрейка юсаса хатĕрлесе лартнă. Михĕсемпе шăналăксене çителĕклĕ хатĕрленĕ. Кӳлмелли хатĕрсем кирлĕ таранах пур. Колхозăн икĕ лашапа ĕçлемелли икĕ молотилка, вĕсене юсаççĕ. Уборка вăхăтĕнче пĕрле апатланма столовăй организацилеççĕ.

Халĕ колхозниксем хĕлле валли çителĕклĕ таран выльăх апачĕ хатĕрлес шутпа 11 лав çулçă касса хатĕрлерĕç, утă çуласçĕ. Колхоз правленийĕ колхозри ĕç вăйне тĕрĕс йĕркеленĕ. Чылайăш колхозниксем пĕве тунă çĕртме ĕçлерĕç. Çак кунсенче икĕ пĕве тунă Колхозра уйрăмах Владимиров, Васильев колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ Вĕсем иккĕшĕ те 150 ĕçкунне ситернĕ. Колхозниксем, колхозра тăрăшса ĕçлесе, тыла çирĕплетеççĕ, Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ.

Ф. КИРИЛЛОВ.

Предприятисемпе артельсенче

СĔМĔРЛЕ. Торф кăларакан предприяти коллективĕ нихăçанхи пек мар пысăк хăвăртлăхпа ĕçлет. Сменăсемпе бригадăсем пулленхи ĕç планне ялан иртерсе тултараççĕ.

— Эпир тухăçлă ĕçлесе хамăран обязанноçсене пурнăçлатпăр. Пирĕн стахановла ĕç мухтавлă та паттăр Хĕрлĕ Çара фашистла вăрă-хурахсене çапса аркатма пулăшĕ. Эпир Хĕрлĕ Çар валли пурне те туса пама хатĕр, — теççĕ рабочисем.

Стахановец Хрисанф Милашин резчик пулса ĕçлет, вăл сменăри плана икĕ хут иртерсе тултарать. Милашин юлташ пек пысăк хастарлăхпа ĕçлекен рабочисем сахал мар. Акă, Я. Евлачев, Х. Юсупов, Кирюшкин юлташсем плана кулленех 160—180 процент таран тултарса пыраççĕ.

Рабочисем хушшинче агитацилламассăллă ĕçе начар мар туса пыраççĕ. Кашни кунах канмалли сехетсенче е ĕç пăрахнă хыççăн калаçусем пулаççĕ, хаçатсем çинчен çĕнĕ хыпарсене вуласа параççĕ.

Х. Л.

МИЛЮТИНРИ МЕХЛЕСОПУНКТРА. Рабочисемпе служащисен коллективĕ ĕç тухăçлăхне хăпартас тата продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн ăнăçлăн кĕрешет. Рамщик пулса ĕçлекен Мазуров, Анисимов, Грачев юлташсем сменăри плана 150-шер процент тултарса пыраççĕ. Крючков мастер сменинчи рамщиксем плана 130—140-шер процент тултараççĕ. Шамсутдинов лесоруб хăйĕн ывăлĕпе пĕрле ĕçлесе плана 300 процент, Мубарашкинсем (пиччĕшĕпе шăлнĕ) кулленхи пекшер норма параççĕ. Çак рабочисенчен шофер Мартынов, Панин, Улыкин тата Осиповпа Кузьмин трактористсем те юлмаççĕ, вĕсем кулленхи нормăна ялан 150 процент таран тултараççĕ.

Рабочисемпе работницăсенчен чылайăшĕ хăйсен ирĕкĕпе фронта кайма ыйтса заявленисем панă. Вĕсен шутĕнче: грузчик Кирбабин, моторист Васин, машинист Митягин, хĕрарăмсенчен Образцова, Егорова, Романова юлташсем те пур.

Мехлесопунктра ĕçлекен рабочисен пĕр шухăш — пĕтĕм вăй-хала курса ĕçлесе Хĕрлĕ Çара пулăшасси.

М. СМЕТАНИН.

КАНАШ. «Авангард» артель коллективĕ тăван çĕршывăн чĕререн парăннине производствăра большевикла ĕçленипе кăтартса парать. Рабочисем хушшинче производствăллă плана тултарманнисем пачах çук, плана пурте 175 процент таран тултарса пыраççĕ. Артель июнь уйăхĕнчи плана 105 процент ытла тултарчĕ. Канатпа вĕрен тăвакан цех (бригадирĕ Спиридон Густерин) производствăллă плана 150 процент таран, алса çĕлекен цехри стахановец М. Балабанов юлташ—183 процент, Н. Вехов — 184 процент, А. Белобанова — 173 процент, В. Григорьевăпа В. Петрова работницăсем 153-шер процент тултараççĕ.

Утиль хатĕрлекен М. Баринов юлташ хăйĕн заданине икĕ хут иртерсе тултарать.

Обществăллă питани артелĕпе пекарнинче ĕçлекенсен коллективĕ те пысăк тухăçлăх кăтартать. Пекарь А. Анисимов юлташ хăйĕн нормине 120 процент таран иртерсе тултарать.

Артельсенче производствăллă хастарлăх ӳссе пынипе пĕр вăхăтрах, артель членĕсем оборона ĕçне вĕренес ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ. Иртнĕ уйăхра физкультура енĕпе ĕçлекен Петровский юлтан ертсе пынипе ГТО значокне илме 67 çынна вĕрентсе хатĕрленĕ. Нумаях пулмасть артельсем хушшинче шăпăлтан тĕл перекенсен ăмăртăвĕ пулса иртнĕ. Ăмăртăва хутшăннисенчен Николай Сергеев юлташ 25 метртан персе 46 очко, И. Федоров —43 очко илнĕ.

И. КОРНИЛОВ.



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Канаш районĕнчи «Комбайн» колхозăн пĕви.
А. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

Колхозниксен пысăк çĕкленĕвĕ

КАНАШ. Шаккăл ялсоветне кĕрекен колхозсем тырпулсене уйран пухса кĕме тимлĕн хатĕрлеççĕ.

Калинин ячĕпе тăракан колхоз тимĕрçисем Г. Федоровпа Ф. Васильев юлташсем çак кунсенче икĕ жнейка, пĕр косилка юсаса лартрĕç, халĕ çĕнĕ урапасем тăваççĕ.

Колхозра çум çумлас ĕçе те аван организацилеленĕ. Ку ĕçре кунсеренех 40 çын ытла ĕçлет. Паянхи куна пурĕ 135 гектар çинчен çумкурăксене çумласа тасатнă.

Çулйĕр строительствинче ĕçлекен бригада та (бригадирĕ А. Васильев юлташ) лайăх ĕçлет. Бригадири Е. Филиппова, Е. Дмитриева колхозницăсем ĕç нормине кулленех иртерсе тултараççĕ.

Çавнашкалах строительство бригадите пысăк çĕкленӳпе ĕçлет. Халĕ ку бригадири колхозниксем 125 чăх-чĕп вырнаçмаллăх çĕнĕ вите туса пĕтереççĕ.

«Искра» колхоз членĕсем тырпулсене уйран пухса кĕме тимлĕн хатĕрленеççĕ. Колхозăн 4 жнейка, 4 сеялка пур. Вĕсене юсаса лартнă, 175 михĕ, 54 урапа хатĕрлесе хунă.

Колхозра 5 бригада, кашни бригадăрах звеносем уйăрнă. Колхоз правленийĕ тырпулсене уйран пухса кĕме план тунă. Вăл планна колхозниксене тĕплĕн паллаштарнă. Халĕ колхозниксемпе шкул ачисем хĕрсех çум çумласçĕ. Паянхи куна 162 гектар çумласа тасатнă.

Колхозсенче политикăллă агитаци ĕçне те лайăх туса пыраççĕ. Агитаторсем стена хаçачĕсем кăларaççĕ, колхозниксене Хĕрлĕ Çар пултарулăхĕ çинчен, Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернисене вуласа параççĕ. Агитаторсенчен уйрăмах И. Кошкин, И. Васильева, К. Кошкин юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Вл. ИГНАТЬЕВ.

Шкул ачисем красноармеецсен çемьисене пулăшаççĕ

СĔНТĔР. Шупуçĕнчи пуçламăш шкул çĕнĕ вĕренӳ çулне пур енчен те хатĕрленсе ситрĕ. Шкула юсас, вутă кӳрсе хатĕрлес ĕçре «Коммунар», «Броневик» тата «Знамя труда» колхозсем пысăк пулăшу панă. Шкулта 4 класс пулать, унта пурĕ 57 ача вĕренмелле. Шкул стенисене шуратнă, классенче чечексем ӳсеççĕ, плакатсем, карттăсем тата портретсем çакнă. Кăмакасем юсавлă. Ачасен тумтирĕсене çакма уйрăм пӳлĕм уйăрса панă. Учительсем пурăнакан хваттерсене юсанă. Шкул 500 тенкĕлĕх наглядной пособисем илсе хатĕрлерĕ.

Ачасем вĕренӳ çулне хавасланса кĕтеççĕ, вĕсем кулленех шкула пырса учительсемпе калаçаççĕ, шкула пулăшма тăрăшаççĕ.

Яшмолкина учительница ертсе пынипе «Коммунар» колхозра 13 ачаран пĕр бригада организацилеленĕ, вĕсем колхоз уйхирĕсенчи çумкурăксене тасатнă çĕрте ĕçлерĕç. Халĕ вĕсем колхоз ферминчи ĕнесене пăхаççĕ, фронта тухса кайнă колхозниксен çемьисене пулăшаççĕ. Акă «Броневик» колхозран К. Лаптев юлташ Хĕрлĕ Çара тухса кайрĕ, унăн килĕнче арăмĕ тата икĕ пĕчĕк ача юлнă. Шкул ачисем Лаптев юлташ çемьине мĕн вăй ситиех таранах пулăшса тăраççĕ. Амăшĕ колхоза ĕçлеме тухсан, ачисене пăхма шкул ачисем юлаççĕ, шыв кӳрсе параççĕ, урай çăваççĕ, килти выльăхчĕрлĕхсене пăхма пулăшаççĕ.

П. ЯРГУНЬКИН.

Шкул ачисем колхоза пулăшаççĕ

ЕТЕРНЕ. Кăкшăмри пионерсемпе шкул ачисем каникул пуçланнăранпа кашни кунах Ильич ячĕпе тăракан колхозра ĕçлеççĕ.

Балдайри вăтам шкулта 9-мĕш класра вĕренекен С. Алексеев колхозăн 15 тихине пăхать.

А. ГРИГОРЬЕВ.

Гитлер тĕрминче

XX ĕмĕрти каннибалсем, Германире власа ярса илнĕскерсем, çĕршыва, унăн хулисемпе ялĕсене пĕрпĕтĕмĕшлĕ концентрацилле лагерь туса хунă. Германи халăхĕн чи лайăх пайĕ, Гитлерпа унăн алйыттийĕсен бандитла планĕсене пурнăçлама фашистла каяшсем хыççăн кайма килĕшменскер, тĕрмесенче асапланать.

«Пысăк парад» ятлă хăйĕн çĕнĕ романĕнче Ник. Шпанов фашистла концентрацилле лагерьсенчи лару-тăрăва сăнласа парать.

Аялта эпир çак романран илнĕ сыпăка пичетлетпĕр.

Çивиттисен хĕвеланăç енĕсем халĕ те юрпа витĕнсе выртаççĕ-ха, анчах хĕвелтухăç енче юртан тасалнă хура толь аспид чулĕ пек йăлтăртатса выртать. Кăнтăр кунĕнче çуртийĕрсен ĕмĕлки ӳкекен вырăнсенче çуп-çапсемпе юр куписем выртаççĕ, вĕсем пит хытă шăнса ларнă пирки çурхи хĕвелĕн ăшшипе те ирĕлмеççĕ. Урамăн ытти пайĕ пĕтĕмпех шывра. Шывран ывăç çулăн сарă тĕслĕ айккисем курăнса тăраççĕ. Вăл çула хĕрлĕ тăпра çине сарса тухнă. Çак çул урамăн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне çитиччен рельс пек тăсăлса выртать. Ку çулпа кашни кунах, тен кунне темиçе хутчен те, лошозка иртсе çӳрет пулмалла.

Лаша урисен йĕрĕсем ниçта та курăнмаççĕ. Пĕтĕм çул тăршшĕнех пĕр йĕр те çук.

Таптаса такăрлатнă çĕр çинче тĕрлĕ формăллă, тĕрлĕ пысăкăшлă йĕрсем: çар йывăр аттăн сарлака путтăк йĕрĕ, хула ботинкин ансăр йĕрĕ, шпагатран алпа сыхса тунă туфлĕн хĕреслĕ-хĕреслĕ йĕрĕ, çара уран пуснă йĕрсем. Кусем вĕсем—пурте çынсен йĕррисем.

Барак алăкĕ çийĕнче — Виççĕмĕш империн государствăллă ялавĕн тĕслĕхĕсемпе сăрдарă «Виççĕмĕш рота» тесе вывеска çакăнса тăрать, çав вывеска вăл çут тĕнчене тухмалли çула пӳлсе тăракан çӳллĕ хӳме пекех пысăк. Анса ларма пуçланă хĕвел çутăлса илсен, чӳречесем çинчи тимĕр решеткăсене пит лайăх курма пулать.

Барак алăкĕ уçăлать. Шупка-кăвак пиртен çĕленĕ тумтир тăхăннă çын урама тухать. Вăл шыв кӳллен-чĕкĕ çине сикет те, шыв тумламĕсене сирпĕтсе чупать. Çавăнтах, çав кӳлленсе выртакан шывпа юнашар хăмăсем сарса тухнă çулсем пур, анчах вĕсем ăна валли мар. Лагере сыхлакалсене валли сарнă типĕ хăмасем çине тĕрмене хупнă çынăн пусма юрамасть. Ăна валли çул—пăрлă шыв çинче. Акă вăл пĕр кĕтессе чупса çитрĕ те тула тухмалли вырăнăн алăкĕнчен кĕрсе çухалчĕ. Тула тухмалли вырăна кунта «пивной» теççĕ. Ку ят ăнсăртран сиксе тухман. Уборнăйсенче чи малтан тасатакансем, алла витре илсен, çак йĕрĕнчĕклĕ ĕçе хăвăрт пĕтерме вĕреннĕ. Анчах çакă фашистла хуралçăсен планĕпе килĕшӳллĕ пулман Тасатакансенчен витресене тытса илнĕ. Вĕсене çур литр сăра кĕрекен кружкăсем, фарфортан тунăскерсем, кружкăсем, шарса тухнă. Тасатмалли пусăсенчи швек çăкăн пек кружкăсемпе ăсатăса илмелле пулнă. Тем пек тăрăшсан та, халĕ ку ĕçе хăвăрт пĕтерме пулман. Сĕрĕпех уборнăй тасатмалла туни администрацишĕн питĕ килĕшӳллĕ пулнă. Çак ĕç пуçлансан йĕрĕнчĕклĕ шăрш пĕтĕм лагере хупăрласа илет, йĕри-тавралла сарăлать. Çак «сăра касĕсем» — барака хăварнисемшĕн праçник вырăннех пулнă. Хуралçăсем, урама тухма хăймасăр, хурал пӳртĕсенче ларса иртереççĕ.

Тĕрме çынни «Пивнойран» тухнă хыççăн типĕрех вырăна пусма тăрăшать, шыв çине ирĕксĕррĕн çеç пусать. Сивĕ ăна каллех ирĕксĕрлесе чуптарать. Анчах унăн кĕл шек шурă пичĕ чупнипе те хĕрелмест. Тĕрме çынни хăй баракĕн алăкĕ патĕнчен темиçе утăмра хуралçăна тĕл пулать. Ку вунвиççĕмĕш ротăн вахмистрĕ. Тĕрме çыннин ун еннелле пăхса тӳп-тӳрĕ тăмалла. Вăл шыв çинче урасене хыттăн пусса утма пуçлать. Пĕр-пĕрне хирĕç пуличчен виçĕ утăм маларах пур правилăсене те пăхăнса çавăрăнать те, аллине картуз кăшăлĕ патне тытса шăпланса тăрать. Вахмистр майĕпен сывхарса пырать. Унăн кӳпшек пичĕ çинче хаяр кичемлĕх. Вăл хăй çине те, çак çут тĕнче çине те, шупка кăвак куртка тăхăннă тата шупка кăвак йĕмĕн вĕçĕсене шывпа йĕпенесрен тавăрнă шурă сăнлă çамрăк ача çине те хытă чарăнса çилленет. Аха, тĕрме çыннин урамра уçăлса çӳренĕ чухне брюкине тавăрма юрать, тесе каламан лагерьти правилăсем çинче. Шăп тăракан шуранка çын умне вахмистр пырса тăрать. Ăна ураран пуçласа пуç патне çитичченех тимлĕн пăхса çавăрăнать. Пуçран пуçласа урана çитичченех çавăн пек çивĕччĕн сăнаса пăхать. Тĕрме çынни шыв çинче тăрать. Унăн çурăмĕ тăрах сивĕ сӳçенчĕк чĕтресе каять, майне пăрать, чавсисем чĕтереççĕ.

— Эсĕ сывă мар-и мĕн, ачам? — ачашласа ыйтать вахмистр. Вăл хăйĕн шыçмах урисене чармакласа тăнă, аллисене çурăм хыçне тытнă, меллĕрех пулма пиçиххи çинчи карабинне сиктернĕ. Вăл нумайччен калаçма хатĕрленет. Тĕрме çынни халь çеç килнĕскер мар. Çавăнпа та çак пӳтсĕр шыçмакăн хаяр ĕçĕ мĕн тутри каланине аванах туять вăл. Сивчир ăна иртенпех чĕтретни çинчен каласа парсан, лайăхи нимĕн те пулас çук. Сĕрĕпех ĕçлес умĕн канма та май пулмасть: паян тула тухмалли вырăнсене тасатмалла. Шăннă пирки чĕтрекен янăха чарма тăрăшса, вăл çапла кăшкăрса ярать:

— Нимĕн те çук, господин вахмистр.

— Ĕненместĕн, ачам, ĕненместĕн. Эсĕ хăвна хăв сыхламастăн. Санăн температура ӳснĕ-и?

— Нимĕн те çук, господин вахмистр.

Вахмистр ĕç тухманнине курать. Питçăмартисене хăпартса вăл шăл витĕр кăшкăрать:

— Кай, сволочь!

Тĕрме çынни, уставра каланă пек çавăрăнса, пĕрремĕш утăма ярса пусать. Шыв сирпĕнет. Тепĕр урине çĕклеме ĕлкĕричченех команда янăраса каять:

— Каялла!

Вăл каллех вахмистр умĕнче. Лешĕ, нимĕн чĕнмесĕр, хăйĕн атти пуçĕ çине тĕллесе кăтартать. Мăскĕн, шуранка çын ăна ăнланать: унăн ури айĕнчен тумлам сирпĕнĕ. Вăл каллех аллине картуз сăмсине айне тытса ярт! тăсăлса тăрать:

— Господин вахмистр, ыйтма ирĕк парăрччĕ.

— Кала, ачам.

Господин вахмистр аттине шăлса тасатма тĕрме çынни Гюнтер Зинн ирĕк пама ыйтать.

—Мĕнле каларăн эсĕ, выльăх?

Гюнтер Зинн пĕр тытăнса тăмасăр тепĕр хут калать:

— 619 номерлĕ сысна сăмси... ирĕк пама ыйтать.

Вахмистр урине тăсса парать. Лешĕ ун умне пĕшкĕнсе, ун атти çинчи тумлама шăлса тасатать.

— Кай!

Урисене шыв сахалтарах сирпĕнмелле пусма тăрăшса, Зинн çавăрăнса тăрать.

—Каялла! — Вахмистр тĕрме çынни йĕм вĕçĕсене тавăрнине аса илнĕ. — Формăна пăсса сӳреме кам ирĕк панă сана?

Ку расра ĕнтĕ тĕрме çыннине опыт пулăшаймасть. Вăл начальство мĕн тума шутланине ăнланмасть.

Вахмистр кĕтет. Лешĕ нимĕн те чĕнмест. Ыйтма юрамасть. Начальство кирлĕ тесе шутлать пулсан, хăех ăнлантарса парать. Зинна татах тепĕр минута хушши тăратса, хуралçă ачашшăн, пуриншĕн те каçарнă пек пулса, çапла калать:

— Йĕмĕр, ачам йĕмĕр...

Зинн васкаса йĕм вĕçне тавăрнине аялалла антарать. Унăн вĕçĕсем шыв айне пулаççĕ.

— Кай!

Вахмистр ывăнчĕ. Команда парсанах вăл хăй малтан çавăрăнать те, хăма сарнă типĕ çул тăрăх малалла каять. Зинн хăйĕн алăкĕ патне аран сĕтĕрĕнсе ситет. Шăнса кӳтнĕ урисене вăл алăк тупанĕ урлă аран-аран çĕклесе каçарать.

Шалта — çурма тĕттĕм. Тул çути куянсен мĕлкисене стенасем çине ӳкерет. Виçĕ ретлĕ нарсем курăнаççĕ. Вырăн çине ларма май çук. Выртма çеç пулать. Кĕрсе выртма этажсем хушшинчи хушăка кĕрес пулать. Кĕрсе выртитчен тумтир хывмалла: хăван вырăнупа хăвран çӳлте выртаканнин вырăнĕ хушши питĕ хĕсĕк, айккинчен айккине те аран-аран çеç çавăрăнкалама пулать. Анчах Зинн ун çинчен шутламасть: паян унăн «сăр. касĕ»...

Ник. ШПАНОВ.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетсĕр пресс-конференцийĕ

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен июлĕн 22-мĕшĕнче пулнă пресс-конференцийĕнче Совет Информаци Бюровĕн начальникĕн заместителĕ С. А. Лозовский юлташ çапла каласа панă:

1941 çулти июлĕн 15-мĕшĕнче Германин 52-мĕш минометнăй химически полкĕн 2-мĕш батальонне çĕмĕрсе тăкнă чухне питех те кирлĕ документсем туртса илнĕ. Вĕсенчен хăшпĕр документсене Сире паллаштарас шутпа çак конференцие черетсĕр пухнă. Туртса илнĕ документсен шутĕнче уйрăмăнах «Мобилизацилле ĕç. Тăшман аллине тем тусан та памалла мар. Главнăй командовани штабĕнчен «Индантрен» текен сигнал илнĕ хыççăн кăна уçмалла», тесе çырса хунă пакет интереслĕ пулса тăрать.

Пакет çинче сургучлă икĕ пичет пур: «Çарăн главнăй командованийĕ. Дымовăй завеса тата газовăй защита тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен войскăсен отделĕ». (Латинла шрифтпа—Оберкомандо де хеерес. Абтейлунг Небелтруппо унд Газабвехре). Пакет ăшĕнче Берлинри типографире пичетленĕ секретлă инструкци пур—«Химиллĕ снарядсемпе тата минăсемпе пересси», 1940 çулти издани, тата çак инструкци çумне хушса çырнă секретлă çырусем, вĕсене 1941 çулти июнĕн 11-мĕшĕнче войскăсене ярса панă. Çак документсене анализ тусан, чи малтанах, икĕ ăпала хăйсем çине тимлĕн çăвăрăнтарса пăхтарăççĕ:

а) Çав инструкцие 1941 çулти июнĕн 11-мĕшĕнче, урăхла каласан, Совет Союзĕ çине тапăниччен 11 кун малтан ярса панă;

б) Пирĕн алла лекнĕ экземплярта йĕркерен çырнă 4322-мĕш номер пур. Çакă вăл инструкцие пит анлăн сарнине, ăна мĕнпур йышши войскăсен кашни батальонĕ патнех çитернине пĕлтерет.

Инструкцин умĕнхи пайĕнче çапла каланă: газсемпе çак тĕллевпе усă курмалла:

1. Противника стройран кăлармалла, унăн çапăçас пултарулăхне хавшатмалла тата боевой вăйне сахаллатмалла;

2. Химиллĕ снарядсемпе персе противника пĕр-пĕр вырăна йышăнма памалла мар.

Газсенчен сыхланас тĕлĕшпе ĕçлекен отделăн ячĕ маскировка кăна пулса тăрать, вăл çакăнтан та курăнать: инструкцин пĕтĕмĕшлĕ пайĕнче çапла каланă: «Газлă хĕçпăшалпа сисмен хушăран пырса тапăнни сывлăшран тапăннинчен сыхланмалли средствăсене хута яриччен витĕмлĕ пырса тивет», тенĕ.

Инструкци çакна палламалла тăвать: отравляющи веществосемпе усă курас пуçаруллăх немĕç войскисен аллинче пулмалла, кунсăр пуçне, вĕсемпе массăллăн усă курмалла тата ăнăçлă пултăр тесен унпа сисмен хушăран пырса тапăнмалла.

Кун пирки çав инструкцин пĕтĕмĕшлĕ пайĕнче акă мĕн каланă:

«10) Химиллĕ боевой веществосем вĕсемпе **массăллăн усă курсан** кăна çитĕнӳ тума май парăççĕ. Химиллĕ боеприпассемпе çителĕксĕр хисеппе усă курни усăсăр пулать тата хаклă боеприпассене ахалех тăкаклани пулать.

11) Химиллĕ снарядсемпе персе çитĕнӳ тăвас тĕлĕшпе ăна **кĕтмен хушăран** туни калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать, çакна яланах тума тăрăшас пулать, уйрăмăнах газа хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе противник лайăх хатĕрленнĕ пулсан тата унăн газсене хирĕç кĕрешмелли лайăх средствăсем пур пулсан.

Çавăн пекех усă куракан боевой химически веществосене улăштарни те тата çав веществосемпе усă курас майсене улăштарни те кĕтмен çĕртен тапăннипех пулса тăрăççĕ. Чĕре вăйсене хирĕç химиллĕ снарядсемпе кĕтмен çĕртен пени питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать, кĕтмен çĕртен пересси ăнăçлă пулсан, çанталăк начар тăнă вăхăтра та хăшпĕр чухне çитĕнӳ тума пулать».

1940 çултах çавтери тĕплĕн хатĕрленĕ çак инструкцирен, çавăн пекех тата 1941 çулти июнĕн 11-мĕшĕнче хушса çырнă тата мĕнпур йышши войскăсен пур соединенийĕсене те, батальонсем таранах, ярса панă икĕ инструкцирен çакă курăнать: Германи верховнăй командованийĕ СССР Союзне хирĕç химиллĕ вăрçă пуçлама йышăннă, кунта тата **войскăсем кĕтмен хушăран массăллăн химиллĕ атака тума тата площадьсемпе объектсене нумай вăхăта час сӳрелмен отравляющи веществосемпе сапса тухма хатĕрленнĕ тата халĕ те хатĕрленеççĕ.**

Лозовский юлташ инструкцисенче кăтартнă тĕрлĕ йышши химиллĕ минăсемпе снарядсен ячĕсене каласа парса, çапла паллă тунă: çав минăсемсĕр пуçне нимĕçсем пачах çĕнĕ йышши снарядсемпе, минăсемпе тата гранатăсемпе усă курма шутлаççĕ, вĕсем тĕрлĕрен отравляющи веществосене пĕр хупă ăшне тултарнă комбинаци пулса тăраççĕ.

Çав документсем пурте çакна кăтартса параççĕ: эпир Германи правительствипе Германи командованийĕ малтанах шутласа хунă преступлениллĕ ĕçе куратпăр. Германи правительствипе Германи командованийĕ, хăйсен агрессивлă тĕллевĕсене пурнăçа кĕртес шутпа, тĕрлĕ йышши отравляющи веществосемпе усă курма чарасси çинчен тунă пĕтĕм тĕнчери мĕнпур килĕшӳсене те пăсаççĕ. Германи правительствипе Германи командованийĕ, нимĕн шухăшласа тăмасăрах, «Вăрçăна сывлама чарса лартакан, çаркăмăллă тата çавăн евĕрлĕ ытти газсемпе тата бактериологиллĕ средствăсемпе усă курма чарасси çинчен» 1925 çулти июнĕн 17-мĕшĕнче тунă пĕтĕм тĕнчери конвенцие пăсма хатĕрленеççĕ, çав конвенци çумне Германия 1929 çулта пĕрлешнĕ. Анчах та Германи правительстви хăйне тӳрре кăларас тесе: ку вăл Германия пăснă пĕрремĕш е юлашки конвенци çеç мар, вăл хут татăкĕ çеç туса хунă пĕрремĕш е юлашки договор çеç мар, тесе калама пултарать.

Нимĕçсем рыцарство тата пархатарлăх çинчен нумай каласма юратаççĕ—картла выляса улталанакан жуликсем çавăн пек декламаци тума та хăнăхнă,—нимĕçсем çапла çирĕплетеççĕ: вĕсем тĕнчене çĕнĕ культура тата çĕнĕ цивилизаци кӳреççĕ пулать, вĕсем культуртрегерсем тата ыт. те пулса тăраççĕ пулать. Вĕсем культуртрегерсем мар, бомбентрегерсем пулса тăраççĕ, вĕсем, хăйсем пуяс шутпа, пĕтĕм тĕнчене çунтарса яма, çĕмĕрсе тăкма, миллионшар çынсене отравить туса вĕлерме, çĕршер пин хĕрарăмсемпе ачасене татăк-кĕсĕк туса вакласа тăкма хатĕр.

Господа фашистсем: хăйсен интересĕсемшĕн халăхăн юнне тăкнине, бомбăсемпе тата отравляющи веществосемпе тĕнчене çĕнтерме тата унран урăх тĕнче туса хума пулать, тесе шутлаççĕ. ССР Союзĕнчи халăхсен ирĕклĕн пурăнас, хăйсен культурине малалла аталантарса пырас тата государство тĕлĕшĕнчен никама пăхăнмасăр пурăнас ирĕк-кăмăлне бомбăсем те, газсем те—тĕнчери немĕнле вăй та путарса лартма пултараймĕ. Пирĕн нервăсем хурçа пек çирĕп. Эпир, кирлĕ пулсан, фашизм хăй чĕртсе янă пушарсенче çунса кайинченех тата хăйĕн юнĕ ăшĕнче путса вилинченех, темиçе çул хушши кĕрешме пултаратпăр тата кĕрешĕпĕр те.

* * *

Ютçĕршыв корреспонденчĕсене туртса илнĕ документсен подлинникĕсене кăтартнă тата çав документсен фотокопийĕсене валеçсе панă.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 21-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Кельн çине пырса бомбăсем пăрахнă хыççăн, хулари промышленноçлă районра пысăк пушарсем чылай тухнă. Летчиксем бомбăсем заводсен корпусĕсем хушшинче çурăлса саланса кайнине курнă. Аахенре бомбăсем заводсен территорийĕсенче çурăлса кайнă.

Роттердамра бомбăсем пăрахнипе доксенче вăйлă пушар тухнă. Пушар сулăмĕ катаранах курăннă, доксене хура тĕтĕм çавăрса илнĕ, вĕсен сывăхĕнчи складсем çулăмпа ялкăшнă.

Англи авиацийĕн соединенийĕсем çав операцисенчен хăйсен базисене пĕр сухатусăр тавăрăннă.

Июлĕн 22-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Германин темиçе самолечĕ Хĕвелтухăç Англири чылай пунктсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахса пĕр хулаве темиçе çурта çĕмĕрнĕ, темиçе çын вилнĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 22-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Франкфурт тата Мангейм çине пырса тапăннă. Çав хуласенчи промышленноçлă объектсемпе коммуникацисем çине бомбăсем пит вăйлăн пăрахнă. Кунсăр пуçне, Англи самолечĕсен соединенийĕсем Шербурга Остендери доксене атакăланă. Çĕрле патруллĕ вĕçевсем тунă бомбардировщиксем Сурçĕр Францири аэродромсене атакăланă. Çыранри авиаци самолечĕсем Дани çыранĕнче Германин çар лагерĕсемпе ытти объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: июлĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух Германи авиацийĕ Англире пысăках мар активлăх кăтартнă, вăл хĕвелтухăç тата çурçĕр-хĕвелтухăç районсенче хăйĕн ĕçне тунипе лăпланнă. Хĕвелтухăç çырансенчи икĕ çула çине бомбăсем пăрахнă. Çынсем хушшинче аманнисем те пур. Темиçе çурта сиенленĕ. Кунсăр пуçне ытти пунктсенчен те бомбăсем пăрахнипе пысăк мар сиен туни çинчен сведенисем килнĕ. Çынсем хушшинче вилнисемпе аманнисем пулман.

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере тăрăх, июлĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух, çĕрле, аçа-çиçĕм пулнине пăхмасăрах, Англи бомбардировщикĕсем Рейн облаçĕнчи промышленноçлă районсем çине тепĕр хут тапăннă. Вĕсем каллех Майн çинчи Франкфурт тата Мангеймри çине тапăннă. Хĕвеланăç Германири ытти районсем çине те тапăннă. Бомбардировщиксен ытти соединенийĕсем Дюнкеркри доксем çине тапăнса, чылаях сиенленĕ Кунсăр пуçне Роттердамри тата Остендери доксем çине бомбăсем пăрахнă. Англи истребителĕсем тăшманăн çурçĕр Францири темиçе аэродромне атакăланă. Англин пур самолечĕсем те хăйсен базисене тавăрăннă.

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви июлĕн 22-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Германи çине пырса тапăнни çинчен тĕплĕн пĕлтерет. Агентство пĕлтернĕ тăрăх, Англи самолечĕсен пысăк соединенийĕсем Майн çинчи Франкфуртри тата Мангеймри промышленноçлă районсем çине бомбăсем вăйлăн пăрахнă. Франкфуртри чугунçул узелĕ çине бомбăсем нумай пăрахнă, вăл Германин суту-илӳн чи пысăк центрĕсенчен пĕри шутланать. Чугунçул çинче вăйлă взрывсем пулнă тата вокзалта нумай тĕлте пушарсем тухнă. Мангеймри промышленноçлă районсем, çавăн пекех Людвигсхафен хĕррисене бомбăсем пит вăйлăн пăрахнă.

Англи авиацийĕ июлĕн 22-мĕшĕнче Çурçĕр Франци çине пырса тапăнсан Германин 4 истребительне персе антарнă. Сена çинчи Ле Трери верфьсем çине те бомбăсем пăрахнă. Англин 3 истребителĕ каялла тавăрăнман.

„Большевизма хирĕç кĕрешме легионсем“ тума хăтланни арканса кайнă

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 22-мĕш. «Свенска Дагбладет» хаçат çапла пĕлтерет: Риббентроп çак кунсенче Германи дипломачĕсен Кенигсбергра пухнă конференцийĕ çинчен Берлинри пичет питĕ начар тата васкаса мар комментарисем парать.

Стокгольмри журналистсем хушшинче çакна конференци йăлтах арканса кайнă, тесе палăртаççĕ. Çав конференцине пĕтĕм Европăра Совет Союзне хирĕçле фронт тума май килменнине пула пухнă пулнă. ССР Союзне хирĕç вăрçă пуçланичченех Риббентроп оккупациленĕ çĕршывсен столицисенчи Германин мĕнпур представителĕсене кирек мĕнле майпа та пулсан «большевизма хирĕç кĕрешме легионсем» тума директива панă. Риббентроп тарçисем, уйрăмах Францире, Данире тата Голландире икĕ батальон та пулсан тăвас тесе тем пекех тăрăшнă. Анчах вăл ĕçрен нимĕн те тухман. Вара Гитлер Риббентропа Германи дипломачĕсене пухса, «вĕсене хирлĕ майпа тепĕр хут инструкци пама» хушнă. Конференцинче Германин Францири, Данири, Швецири тата Европăри гитлерла вăрăхурахсем оккупациленĕ ытти çĕршывсенчи дипломатиллĕ представителĕсем пулнă. Риббентроп тухсе каланă хыççăн, Германин Данири посланникĕ Абец тата ыттисем те тухса каласа. Пурте пĕр пек пулса, оккупациленĕ çĕршывсенче «большевиксене хирĕçле легионсем» тума майсăк халăхсем инçетрен çăлăнăçлă пулнă-ха, тесе йышăнать.

Германи хаçачĕ ирĕксĕр йышăнни

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Германин «Франкфуртер цейтунг» хаçачĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри вăрçă ĕçĕсем çинчен статья пичетлесе кăларнă. Хаçат тӳрремĕнех çапла йышăнать: хăшпĕр фронтсенче немĕçсем çĕнтерни çинчен калакан пĕлтерӳсем «ытлашши малтан пулнă». «Эпир çĕнсе илнĕ тесе шутланă крепоçсем, — тенĕ статьяра,— Германи салтакĕсем асăрхамасăр юлнă хăйĕн çĕр айĕнчи укрепленийĕсемпе усă курса, сасартăк хирĕç тăма тытăнчĕç. Эпир çĕнсе илнĕ тесе шутлакан территорисенче лере те, кунта та çĕнĕрен çапăçмалла пулать». Хаçат выраççем тимлĕн хирĕç тăнине, «çакна фанатизмпа кăна ăнлантарса пама пултать» тесе палăртать тата пулса иртекен çапăçусен йывăрлăхĕ историре халиччен пулман-ха, тесе йышăнать.

Румыни халăхĕ ССР Союзне хирĕç вăрçасшăн мар

СТАМБУЛ, июлĕн 21-мĕш. (ТАСС). «Дейли мейл» хаçатăн Стамбулри корреспонденчĕ, юлашки эрнере Совет самолечĕсем Румыни çине бомбăсем пырса пăрахасси чылай вăйланни çинчен пĕлтерет. Вырăс авиацийĕ нефть заводчĕсем çине бомбăсем пăрахнă, миллион тонна горючи пĕтерсе тăкнă, нефть вышкисене сиенленĕ. Специалистсем çакна çирĕплетеççĕ: самолетсем çĕнĕрен килсе тапăнмасан та, Румынин нефть промышленноçĕ халиччен ĕçленинчен виçĕ пайĕнчен пĕр пайне сахалтарах нефть туса кăларать.

Дунай юханшывĕ çинчи Сулина тата Галацы порчĕсем çине бомбăсем пăрахнипе землечерпалкăсене тата плотинасене пит хытă çĕмĕрнĕ. Ку питех те пысăк вырăнта тăрать. Яланхи пекех, çак вăхăтра, Дунай юханшывне ăшăхланма парас мар тесе нумай мерăсем йышăнаççĕ, çак ĕçсене тума пăрахни темиçе эрнеренех сисĕнтерет. Сулина патĕнчи дамбăна çĕмĕрни тата землечерпалкăсене сиенлени Дунай тăрăх пароходсем тата карапсем çӳрессине хăвăрт чарма пултарать. Ку нимĕçсемшĕн питĕ хăрушă, мĕншĕн тесен вĕсемшĕн Дунай юханшывĕ Румынипе тата Болгарипе çыхăну тытас ĕçре тĕп вырăнта тăрать.

Çаксем пурте, тесе çырать малалла корреспондент, Румыни халăхне пысăк шухăша ярать. Румыни халăхĕ Российăна хирĕç вăрçа хутшăнасшăн пулман. Унăн пĕтĕм шухăш-кăмăлĕ Румынирен хăйĕн курайман «союзникĕ» — Венгрия туртса илнĕ Трансильванине каялла тавăрасси пулать. Румынипе Российăна хирĕçле вăрçа Германия хăратса тата улталаса хутшăнтарнă. Германия Румынипе вăрçă хăвăрт тата çăмăллăн пĕтет тесе каланă. Вăл Румынипе тулăн питĕ нумай запасне памалла пулнă, çапла вара Румынипе нимĕçсем оккупациленĕ вăхăт хыççăн халăх выçăпа аптранипе çăмăллатма шутланă. Вĕсене çапла каланă: нимĕçсем виçĕ кун хушшинчех сывлăшра хуçа пулса тăраççĕ, Румыни çине сывлăшран тапăнасси пулмасть, тенĕ.

Анчах та, чăн-чăн ĕç румынсене Германия пачă сăмах мĕне тăнине лайăх кăтартса пачĕ. Вĕсене тăвата эрне хушши хаярăн вăрçма тата питĕ нумай çухатусем тума тиврĕ. Румыни çине, «Германи сывлăшра пуçпулса тăрăтчен» виçĕ кун хушши кăна мар бомбăсем пăрахнă тата çĕмĕрнĕ, ун çине тăватă эрне хушши, çитменнине тата ытларах та вăйлăрах тата тĕл пырса пăрахнă. Яссы тата Констанца хулисене ишĕлтерсе аркатнă. Нацилле доходăн пысăк пайне паракан нефть промышленноçĕ çине аркатмаллах бомбăсем пăрахаççĕ. Халĕ румынсем киле тавăрăнастăн, хăйсен юлашки ресурсине мобилизацилесшĕн, çитес выçă хĕле лайăхрах кĕтсе илме хатĕрленесшĕн. Анчах та Германи хуçисем румынсене вăрçа хăваласçĕ. Германи приказĕсене пăхăнасшăн пулманнисене персе вĕлернĕ.

Антонеску правительстви—Германи фашисчĕсен тара кĕрĕшнĕ агентури

БЕРН, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС). Антонеску генералпа унăн шайкин, Румыни халăхне ССР Союзне хирĕç преступлениллĕ вăрçа кĕртсе янă шайкăн сутăнчăкла, авантюристла политикăн анлă массăсене çеç мар, тата Румынири буржуаллă политикăллă çынсене те калама çук хыттăн тарăхтарса янă. Сăмахран, буржуаллă пысăк партисем — либераллă тата национал-царанистла (национально-крестьянская) партисем те Антонеску генералпа унăн шайкин политикипе килĕшмеççĕ.

Нумаях пулмасть Румынире листовка евĕрлĕ çыру салатнă. Вăл çырăва Румынин халăхри режимĕ тĕлĕшпе оппозициллĕ икĕ пысăк парти лидерĕсем — Дину Братиану (либеральная партия) тата Юлия Даниу (национально-крестьянская партия) Антонеску генерал ячĕпе çырнă. Вăл çыру Румынин халăхри правителĕсен предателле политикине тăрă шыв çине кăларса палăртать.

«Нацилле икĕ партин руководителĕсем пулса,—тесе çыраççĕ Братианупа Даниу, — пире тата пĕтĕм çĕршыва асап кăтартакан тревогăна çирсе яма ыйтатпăр. Венгрия виçĕ çĕршыв хушшинче тунă пакт çумне пĕрлешсен, румынсем хытă шикленчĕç, эсир Берлина тухса карăр. Виçĕ çĕршыв хушшинче тунă пакт çумне пирĕн мĕн шутпа пĕрлешмеллине халăх ăнланмасть. Эпир пакт çумне, Венгрие унăн хальхи чиккисене гарантилекен пакт çумне пĕрлешсе хамăр çине илекен обязательствăсем вырăнне пире мĕн пама пулнă-ха?

Эсир ертсе пынине эпир катастрофа патне çывхарса пынине эсир вара курмастăр-им? Çимĕçсемпе таварсен хакĕ çавтери ӳссе кайрĕ. Пире çаратаççĕ. Германин оккупацилле войскисем пирĕн çăварти юлашки татăк çăкăра та туртса илеççĕ. Пирĕн çĕршыври продовольствие пĕтĕмĕшпех Италипе Германие турттарса илсе каяççĕ. Румынире çимĕç продукчĕсене тупма та çук. Пире выçлăх хăратса тăрать.

Обществăра пурте çакăн пек шутлаççĕ: Берлинра тата Римра пушă сăмахпа пама пулни вырăнне эсир хăвăр çине ытлашши йывăр обязательствăсем илнĕ. Эсир пире вăрçа илсе тухма пулнă. Эпир ыйтатпăр сирĕнтен: мĕн тума тата камшăн пакт çине алă пусрăр? Пире вăрçа, хамăр пысăк çухатусем тумалли вăрçа туртса кĕме пултаракан обязательствăсем пани вырăнне эсир мĕн илтĕр? Эпир Германин кирек-мĕнле влиянийĕнче пулсан та, пирĕншĕн тăшман пулса тăракан çĕршывсене хӳтлеме е халиччен пирĕн туссем пулнă çĕршывсене хирĕç вăрçа тухма, урăхла каласан, пирĕн нейтралитет политикинчен каялла чакма ăçтан хушма пултартăр-ха пире вăл. Румынипе мĕн пуласси çинчен эсир шутласа пăхнă-и? Эсир йышăннă решени румынсен интересĕсемпе килĕшӳллĕ тата вăл вĕсен ирĕк-туйăмĕсене кăтартса тăрать, тесе шанма пултартăр-и эсир? Çĕршыв çине халăх интересĕсене хирĕç калакан обязательствăсене илме кам право пачĕ сире? Сирĕн лайăх пĕлсе тăрас пулать: Румыни халăхĕ Трансильванине каялла илессишĕн венгерсене хирĕç кăна вăрçма килĕшет. Хăть кам, вăл шутра эсир те, румынсене урăх йышши вăрçа илсе тухма хăтланать пулсан, унăн ĕç тухмĕ, унăн кунçулне татса парĕç. Юханшыв çыранĕсенчен тухнă шыв хăйĕн çулĕ çинчи мĕнпур чăрмавсене çĕмĕрсе, сирсе пынă пекех халăхăн каяр тарăхăвĕ те çавнашкал çынсене çавăн пекех пĕтерсе хурĕ».

Иден заявленийĕ

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: июлĕн 21-мĕшĕнче, Бельгия никама пăхăнмасăр пурăнма пуçланă кун, Англин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден Бельги халăхне чĕнсе радио тăрăх сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче: Германине малашне кашни 30 çул хушши Европăна асаплантарма памалла мар, тенĕ.

Малалла Иден çапла каланă: 30 çул хушшинче Бельги çине икĕ хутчен халăр.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

„ГЛАВКИНОПРОКАТĂН“
ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОНТОРИ
РЕСПУБЛИКĂРИ ЭКРАНСЕМ ÇИНЕ
ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂН ФРОНЧĔСЕНЧЕ ӲКЕРНĔ
КИНОРЕПОРТАЖ
„Союзкиножурналăн“ 65, 66 тата 67-мĕш №-лĕ çĕнĕ киножурналсем кăларнă.
Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕрле кĕрешесси çинчен СССР Правительствипе Великобритани хушшинче килĕшӳ туни çинчен 1941 çулти июлĕн 12 мĕшĕнче ятарласа ӳкернĕ киножурнал пур.
Кинотеатрсемпе клубсен рекламине сăнаса пырăр.

Вниманию поступающих в Чувашский пединститут.
В дополнение к правилам приема в Чувашский пединститут, об'явленным в газетах „Красная Чувашия“ № 97, 114, 149, „Чăваш Коммуни“ № 103 123, 141, „Çамрăк большевик“ № 67—извещаем, что распоряжением Наркомпроса срок обучения в пединституте установлен 3-годичный, в Учительском институте—2-годичный.
От оплаты за обучение дополнительно к об'явленным категориям освобождаются дети рядового и младшего начальствующего состава РККА.
Прием заявлений продолжается.
3—1 Дирекция Чувашского пединститута.

Румыние кам тытса тăрать

Советсен çĕршывĕ çине вăрă-хурахла тапăнма хатĕрленсе Германин фашистла правительстви Румынири власа чи усал, тискер пуçкасакансене—Совет Союзĕн тата Румыни халăхĕн усал тăшманĕсене лартса тухнă.

Правительство пуçĕнче Румыни халăхĕн паллă палачĕ, фашистла Германин тахçанхи агенчĕ генерал Антонеску тăрать. Антонеску Совет Союзне питĕ кӳрайманнине пĕлсе Румыни правителĕсем ăна Кишиневри çар корпусĕн командирĕ тунă. Вăл унта Бессараби хресченĕсен тискер палачĕ пулнине хăйне чапа кăларнă. Германи штыкĕ пулăшнипе власа хăйĕн аллине илнĕ хыççăн генерал Антонеску Румынири ĕççыннисене хирĕç юнлă террор пуçласа ячĕ. Легионерсене хирĕç кĕрешнĕ пек пулса, легионерсен восстанийĕ хыççăн Антонеску Румынири рабочисемпе хресченсене 30 пин çынна ытла арестленĕ. Румынире çурçул хушши ĕнтĕ кашни кунах çар сучĕ ĕçлет, унăн приговорĕ тăрăх Румынири рабочисене, хресченсене тата интеллигентсене персе вĕлереççĕ, каторгăна ярăççĕ.

Антонеску Совет Союзне хирĕç кĕревсĕр агитаци организацилене. Çĕршывăн экономикăллă мĕнпур ресурсине Германи фашисчĕсене панă, вĕсем Румыни правителĕсемпе пĕрле Румыни территорине Совет Союзĕ çине тапăнмалли база туса хунă.

Антонескусăр пуçне, правительство составне çапăçу хирĕсенче нимĕнпе мухтава тухман, анчах Германи фашизмĕпе сыхăну тытнипе паллă пулса тăракан, Совет Союзне тата Румыни халăхне курайман генералсен ушкăнĕ кĕрет.

Уйрăмăнах Румынин çар министрĕ Якобич пуринчен те наллăраххи пулать. «Румыни халăхĕн» çак ывăлĕ Румыни чĕлхине те пĕлмест, вăл хăйĕн офицерĕсемпе те нимĕçле калаçать. Ăна çак ĕçе Германин генеральнăй штабĕ лартнă.

Çĕршывра террор организацилес ĕçре генерал Антонескуна унăн племянникĕ, Румыни боярĕ, правительство составне кĕрекен Михаил Антонеску активлăн пулăшать. Михаил Антонеску çинчен Румынин пĕр журналисчĕ çапла каланă: «Вăл правительствăри гестапо. Вăл министрсен мĕнпур ĕçĕсене асăрхаса тăрать. Унсăр пуçне министрсем нимĕнле решени те йышăнма пултараймаççĕ».

Çак мĕнпур компание чăннипе илсен Германни официальнăй агенчĕ — Германин Румынири посланникĕ—Киллингер, Германири палламалла провокатор тата шпион ертсе пырать, вăл мĕн хушшинне Румыни правителĕсем пурнăçламаççĕ.

Киллингер унччен Германин Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи дипломачĕ пулнă. Вăл Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче сăтăрла тата шпионла ĕç тунă май ăна хирĕç протест вăйланса кайнă пирки, унăн ирĕксĕрех çĕршывран тухса кайма тивнĕ. Америка хаçачĕсем Киллингер Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан сыранĕсене тата Мексикăра Германи шпионажĕн руководителĕ пулса тăрать, тесе çырнă.

Англи хаçачĕсем Киллингер биографине пичетлесе кăларса, çав статьяна питĕ характерлă ят панă. «Çын вĕлерекенрен пуçласа посола çитиччен» тенĕ. Çак заголовок Киллингер вăл хам иккенне питĕ тĕплĕн кăтартса парать. Германи фашисчĕсем влаçа хăйсен аллине илсенех Киллингер Ремпа тата Германин ытти фашисчĕсемпе-штурмовикĕсемпе пĕрле Германи коммунисчĕсене пĕтерес тĕлĕшпе киревсĕр ĕçсем тунă. Хăйĕн мемуарĕсенче (çырăвĕсенче, асаилӳсенче) вăл хăй коммунистсене тата антифашистла деятельсене çавтери тискеррĕн асаплантарни çинчен уçăнах çырать.

Çак кĕнекере Киллингерĕн пуçкасаканси группи, унăн приказĕ тăрăх ĕçленĕскер, вĕсен аллине лекнĕ çамрăк хĕрарăм-социалистăна мĕнле асаплантарни çинчен çырса кăтартнă. Вăл нимĕн намăса тата вăтанма пĕлмесĕр çапла çырать: «Эпĕ панă сигнал тăрăх жертвăна повозка тăрăх хурса, ăна нухалесемпе çурăмĕ çинче шурă ӳт татăкĕ юлмиччен хĕнерĕç». Киллингер çавăн пекех нимĕн намăса пĕлмесĕр пĕр коммуниста вăл хăй мĕнле асаплантарса вĕлерни çинчен каласа парать. Пĕтĕм кĕнекене çакăн пеккисем çинчен çырса тултарнă. Çын вĕлерекен çак мастера Гитлер тивĕçлипе хаклани, ăна хăй вăхăтĕнче Саксони премьер-министрне лартнă. Кунта Киллингер тискерле террор тунă.

Паллах ĕнтĕ, çакăн пек «задаткăллă» çын Румынин Германи колонийĕ тата Совет Союзне хирĕç плацдарм туса хурас ĕçре питĕ хаклă пулнă. Çак садист тата изувер халĕ Румынин чăн-чăн хуçи пулса тăрать.

Германи çарĕ Румынире туртса илнĕ хыççăн, Киллингерпа пĕрле Германин çакăн пек «деятелĕсем» пиншерĕн килнĕ. Вĕсем Румынин мĕнпур экономикине — нефтьне, промышленноçне, ялхуçалăхне туртса илнĕ, Румыни боярĕсемпе тата капиталисчĕсемпе пĕрле халăха хирĕç тискер террор организацилеленĕ.

А. Ш.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 4—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, тежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.
НТ 4142
Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ Ь 345, ф. б 58 84 п. л.